24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 МАЙ 29 КĔҪНЕРНИКУН 124 (5839) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Çар ĕçне вĕренесси — кулленхи задача

Империализмлă иккĕмĕш вăрçă вучĕ ĕнтĕ Европăпа Азири тата Африкăри нумай çĕршывсенĕ хыпса илчĕ. Çĕр çинчи мĕншăр сынсенчен 3/4 пайне империалистсем тĕрĕслĕхлĕ мар, империализмлă вăрçа туртса кĕртрĕç. Вăрçă капитализмлă çĕршывсенчи ĕçсăнисем çине вĕçĕмсĕр йывăрлăхсемпе хĕн-хурсем тиерĕ.

Çакăн пек йывăр условисенче пирĕн Совет Союзĕ хăйĕн мирлĕ политикине пурнăçа кĕртсе пырать. «Хăйĕн тулашри политикинче Совет Союзĕ çаксем çине таянса тăрать:

1. Хăйĕн ӳссе пыракан хуçалăхлă, политикăллă тата культурăллă вăй-хăвачĕ çине;

2. Хамăран совет обществин моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ çине;

3. Хамăран çĕршыври халăхсен туслăхĕ çине;

4. Хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Хĕрлĕ Флочĕ çине;

5. Хăйĕн мирлĕ политики çине;

6. Мирлĕ пурнăçа упраса тăрассишĕн чĕререн интересленекен пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем моральнăй пулăшăвĕ çине;

7. Мĕнле те пулин сăлтавсене пула мирлĕ пурнăçа пăсас мар тесе интересленекен çĕршывсен ырă ăсхакăлĕ çине» (Сталин).

Çакăн пек ĕнтĕ Совет Союзĕн мирлĕ политикин никĕсĕсем. Çаксене пула Совет Союзĕ хальхи вăхăтра вăрçă пулашăнче тăрать. Анчах, пурте пĕлетпĕр, капитализмлă йĕриташ пур чухне Совет Союзĕмĕн те вăрçă харушлăхĕ пур. Тĕнчери лару-тăру хальхи вăхăтри пек кăткăс чухне кĕтмен çĕртен темĕн те сиксе тухма пултарать. Çавăнпа пире Сталин илташ: капитализмлă йĕриташ çинчен нихăçан та манмалла мар, пĕтĕм совет халăхне мобилизацияллĕ хатĕрлĕхре тытса тăмалла, тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерсех пымалла, тесе вĕрентет.

Социализмлă тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерме кашни харпăрхăй выраннĕнче вăя хурса, тухăçлă ĕçлени, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота тĕреклетсех пыни кирлĕ. Ку задачăна пурнăçа кĕртме çавăн пекех тата оборонăллă организацисем (Осоавиахим, РОКК) урлă пĕтĕм халăха çар ĕçне вĕрентсе пымалла. Çак ĕçе, рабочисене, служащисене, интеллигенцие тата колхозниксене государство обороны ĕçне тума хатĕрлесе пырассине, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен тата политпросвет учрежденийĕсен куллен-кун, план тăрăх пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Тăван çĕршыва сыхлама хатĕрленессине—çар ĕçне вĕренессине — ĕççыннисем пысăк выраха хураççĕ, ăна вĕсем тăван ĕç тесе шутлаççĕ. Çакна осоавиахимовецсен Чантăр ялĕ патĕнче (Шупашкар хули сывăхĕнче) нумай пулмасть пулса иртнĕ вĕренӳллĕ занятийĕ те лайăх кăтартса тăрать. Кунта, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче пулин те, ялти мĕншăр колхозниксем занятие тухнă,— заняти вăхăтĕнче сухара арçынсем выраннe колхозницăсем ĕçленĕ. Заняти лайăх иртнĕ. Осоавиахимовецсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе çакăн пек лайăх организацилесе, уйра иртнĕ заняти пысăк усă панă.

Ĕçхалăхне çар ĕçне вĕрентсе пырасси—пысăк та паха ĕç. «Тăван çĕршыва сыхласси ССР Союзĕн кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ», тесе калать Сталинла Конституци. Çак таса тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртме кашни гражданинăн мирлĕ вăхăтра хатĕрленсе пымалла, çар ĕçне çине тăрса вĕренмелле.

Çар ĕçне вĕренесси—кулленхи задача. Çак задачăна пурнăçа кĕртессине ВКП(б) райкомĕсен çарĕç отделĕсен организацилесе тата ертсе пымалла.

Социализмлă тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерме, мобилизацияллĕ хатĕрлĕхре тăма пурте çар ĕçне çине тăрса вĕренер!

Уяртасса кĕтмесĕр, хăвăртрах акмалла!

Çуракинче пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн ВКП(б) райкомĕсем тата ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

87. **М. П. Купцов** — Сĕнтĕр районĕнчи «1-ое Мая» колхоз сеяльщикĕ, лашапа ĕçлемелли 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14,2 гектар акать.

88. **К. Е. Чиновников** — Сĕнтĕр районĕнчи «Свобода» колхоз сеяльщикĕ, лашапа ĕçлемелли 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 13 шер гектар акать.

89. **Л. Д. Илугин, Н. Я. Тепеев** — Сĕнтĕр районĕнчи «Новал Юнга» колхоз сеяльщикĕсем, 11 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 6 гектар вырăнне яланах 11-шер гектар акнă.

90. **«Красный герой» колхоз** (председателĕ Данилов илташ) — Çĕрпӳ районĕ. Колхоз çурхи тĕштырă культурисене 5 кун хушшинче, агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

91. **А. С. Рябин, П. Аванский** — Октябрьски районри «Волга» колхоз сеяльщикĕсем, 11 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 6 гектар вырăнне кашни кун 11,6 гектар акаççĕ.

92. **П. М. Сумароков** — Октябрьски районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз плугарĕ, икĕ касăллă плугпа норма тăрăх 1,2 гектар вырăнне кашни кун 2,15 гектар сухалать.

93. **И. Г. Гордеев** — Октябрьски районри «Путь коммунизма» колхоз сеяльщикĕ, 11 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 6 гектар вырăнне кашни кун 11,5 гектар акать.

94. **«Авангард» колхоз** (председателĕ Карлинов илташ) — Первомайски район. Колхоз çурхи тĕштырă культурисене 5 кун хушшинче, агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

95. **«Большевик» колхоз** (председателĕ Алексеев илташ) — Первомайски район. Колхоз çурхи тĕштырă культурисене 5 кун хушшинче, агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

96. **Н. Иванов** — Первомайски районри «Авангард» колхоз сеяльщикĕ. 12 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 13 шер гектар акнă.

Коммунистсен примерĕ

ЕЛЧĔК. Аслă Елчĕкри пуçламĕш парторганизаци ертсе пыннипе Ленин ячĕпе тăракан колхоз çуракине пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени çуракине кĕске вăхăт хушшинче вĕçлеме пулăшрĕ. Колхоз кăçал 987 гектар ытларах тĕштырă, вăрлăхсене 70 процент ытларах яровизацилесе акнă.

Çуракине иртте рес ĕçре стена хаçачĕсем вăйлăн пулăшрĕç. Кашни бригадăрах стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăчĕç.

Коммунистсем çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа иртте рессишĕн кĕрешĕве пуçарса, ĕçре хăйсем пример кăтартса пычĕç. Парти членĕ И. Антонов юлташ ертсе пыракан бригадăра тракторсем пулман пулсан та тĕштырăсене ытти бригадăсемпе пĕр вăхăтрах акса пĕтернĕ. Парти членĕн кандидачĕ Е. Еливанова юлташ сухалакансем нормăна кулленех 120—130 процент тултарса пычĕç. Комсомолец П. Федоров сеялкăпа кунсерен 6 шар гектар акас вырăнне 10-шар гектар акнă. Пилĕкмĕш бригадăн бригадирĕ И. Алеев çуракине лайăх иртте рчĕ, кĕрхи калчасене 90 гектар çинче апат панă.

Çураки вăхăтĕнче ытти ĕçсем те тунă. Ял хушшинче икĕ кĕпер юсанă, икĕ пĕве тунă, çак кунсенчех шыв арманĕн пĕвине пĕвелеме тытăнатпăр.

Е. МАРТЫНОВ.
Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

Ăмăртса ĕçленипе

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пынă. Ку вăл колхозра политикăлла-массăлла ĕç пулманнинчен килнĕ. Кăçал ĕçсем аванрах пулса пыраççĕ. Колхозра калаçусем, лекцисем иртте рессине аван йĕркеленĕ. Çавна май колхозри ĕçсем те кăçал вăхăтра пулса пыраççĕ. Çуракине тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ.

Кĕрхи тырă калчисене сӳреленĕ, калчасене апат панă. Сеялкăпа ĕçлекенсем И. Андрианов, Н. Алгашев юлташсем хăйсен нормисене 150 процентран кая мар, сухалакансем Ф. Варламов, Н. Андреев колхозниксем нормăсене 150—200-шер процент тултарса пычĕç. Çураки вăхăтĕнче бригадăсем тата звеносем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Комсомолецсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче перерыв вăхăтĕнче хаçат-журналсем вуласа параççĕ, тĕнчери лару-тăру çинчен калаçусем ирттереççĕ. Икĕ кунта пĕр номер «Большевик» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать.

Ăмăртса ĕçленипе Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз çуракине кĕске срокра, майăн 23-мĕшĕнче вĕçлерĕ. Халĕ колхоз пахча-çимĕçсем лартса кăварма хатĕрленет. **Г. ТОМАСОВ.**

Хастарлă сеяльщиксем

ШАХАСАН. «Майăн 1-мĕш» колхозра çураки ĕçĕнче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ. Колхоз çуртрисене 6 кунта акса пĕтерчĕ. И. Емельянов, Ф. Владимиров сеяльщиксем ĕç нормине 175 процент тултарса пынă. Вĕсем 12 ретлĕ сеялкăпа 8 гектар вырăнне 14-шар гектар акнă. Çавăн пекех Викторов, Федоров, Петров юлташсем кунне 1,75 гектар сухалас вырăнне 1,5 гектар сухаланă. С. Федоров 6 гектар вырăнне 7,5 гектар сӳреленĕ. **В. АНТОНОВ.**

Пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç

СОВЕТСКОЕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине кĕске срокра пысăк ăнăçлăхпа вĕçлерĕ. Пĕтĕмпе тĕштырăсем 160 гектар акнă. Сеялкăсемпе пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç.

Колхозра 4 бригада. Бригадăсенче, звеносем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ. И. Герасимов, С. Васильев, П. Алексеев, В. Сорокин сеяльщиксем 13 ретлĕ сеялкăпа кунсерен 13,30 гектар акса пычĕç. Суха тăвакансем: Н. Захаров, Г. Архипов юлташсем хăйсен нормисене 150—160-шар процент тултарса ĕçлерĕç.

Вăрлăхсене пĕтĕмпех формалинпа чӳхесе тата яровизацилесе акнă.

Колхоз çĕре минерăллă удобренисемпе нихçан хинчен те нумайрах çемçетрĕ. Хĕл вăхăтĕнче хатĕрленĕ тислĕкпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе т. ыт. те тĕплĕн усă курчĕç.

Халĕ колхоз çумкурăксемпе кĕрешме хатĕрленет. **Ф. СЕМЕНОВ.**

Малта пыракан колхозра

ÇЕМЕРЛЕ, майăн 26-мĕш. **(Телефонпа хăмăр корр.).** Майăн 25-мĕш тĕлне районри колхозсем пĕтĕмпе 5.734 гектар çуртри акнă, вăл ака планне 78,6% тултарнине пĕлтерет. Ку шутран тĕштырă культурисем 5.210 гектар акнă — плана 98,2% тултарнă. Чылай колхозсем ака ĕçне пысăк хăвăртлăхсемпе вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Майăн 26-мĕш тĕлне 25 колхоз, вирпе хуратулсăр пусне, акса пĕтерчĕç. Районри чи пысăк колхозсенчен пĕри — Мăн Улхапри «Красноармеец» колхоз ака ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. План тăрăх ку колхозăн 749 гектар тĕштырă акмалла пулнă, вăл 773 гектар акнă. Кунсăр пусне колхоз 65 гектар йĕтĕн акнă, 66 гектар çинче тунката кăкланă.

«Красноармеец» колхозра бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ. Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксене тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарчĕ. Уйрăм колхозниксем ака-суха ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Акă А. Шанин 11 ретлĕ сеялкăпа 6 гектар вырăнне кунне 11-шер гектар акса пычĕ, И. Горбуновпа И. Хосин колхозниксем 1,25 гектар вырăнне кашни кун 2-шер гектар сухаларĕç.

Акса пĕтернĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз çуракине лайăх иртте рчĕ. Сеялкăсемпе пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ. Алăпа пĕр пĕрчĕ те акман. Уйхирте сельпо организацилеме буфет ĕçлерĕ. Уйрах библиотека та пулчĕ.

А. ИВАНОВ.

Трактористсен ăмăртăвĕ

ШАХАСАН. Машинно-тракторлă станци кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерессишĕн Канаш МТС-пе ăмăртать. Çуракинче Шăхасан МТС малта пырать. Кунта иртнĕ çулхи пекех, МТС-не республикăра мала кăларассишĕн пыракан ăмăртăва пур бригадăсемпе трактористсем те хутшăннă. Вĕсенчен чылайăшĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ĕçпе çирĕплетме пултарчĕç. Ку тарипчен МТС тракторĕсемпе 4049 гектар çинче тĕрлĕрен ĕçсем туса иртернĕ, е çуракинчи ĕçсен планне 75 процент тултарнă.

Ӳрăмăнах 1, 6, 8, 14-мĕш бригадăсем малта пыраççĕ. Виçĕ çул хушши ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулса, 1-мĕш тракторнăй бригадăна ертсе пыракан Яким Сергеев бригади ака ĕçĕсен планне майăн 21-мĕш тĕлнех 105,4 процент тултарчĕ. Çак шутран тырпула трактор сеялкисемпе акас плана 113,3 процент пурнăçланă. Александров юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригада ака ĕçĕсен планне 104,2 процент, сеялкăна акасснe 120 процент тултарнă. Вунпăр тракториспем стахановла меслетсемпе ĕçлеме пултарнине кăтартса пачĕç. Акă вĕсем: 8-мĕш бригадири Назаров тракторист норма тăрăх 4,2 гектар сухалас вырăнне, хăйĕн сменинче 4,35 гектар сухаласа пырать. Çав бригадири Сергей Егоров тракторист 4,2 гектар вырăнне, «СТЗ» тракторпа ĕçлесе сменăра 6,08 гектар сухаласа пынă, çак вăхăтрах акана тухнăранпа 31,9 килограмм горючи перекетленĕ.

Кашни çулах чаплă ĕçпе палăрса тăнăçăн выставкăн Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă Николай Чернов тракторист «СТЗ» тракторпа ĕçлесе нормăна 4,2 гектар сухалас вырăнне, хăйĕн сменинче 5,94 гектар сухаласа пынă. Çав вăхăтрах вăл кашни гектара сухалама каякан горючирен 1,7 килограмм перекетлесе хăварнă.

1-мĕш бригада трактористчĕ Н. Яковлев «СТЗ—НАТИ» тракторпа сменăра 7,6 гектар сухалас вырăнне 12-мĕш гектар сухаланă, пурĕ 112,5 килограмм горючи перекетленĕ.

ВКП(б) членĕн кандидачĕ Петр Максимов тракторпа акас ĕçре пултарруллă ĕçленине кăтартрĕ: вăл 27 ретлĕ сеялкăпа талăкра 13 гектар акас вырăнне 20-шер гектар акса пычĕ.

Çав вăхăтрах начар ĕçлекен бригадăсемпе трактористсем те пур-хăçан 9-мĕш бригада (бригадирĕ Куликов) ку тарипчен те ака ĕçĕсен планне 4 процент çеç тултарнă. Пальмов юлташ бригади те ака планне 64 процент кăна тултарнă. Артемьев бригади те юлса пырать. 9-мĕш бригадăра радиатор юсавлă маррипе трактор 3 кун хушши ĕçсĕр тăнă.

МТС умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри — вăл пур бригадăсемпе трактористсене те малта пыракан, лайăх ĕçлекен тăвасси пулать.

В. ЧЕРНОВ.

Ирхи çĕртме сухинче

ÇЕРПӲ, майăн 28 мĕш. **(Хăмăр корр. телефонпа).** Тĕштырăсем акса пĕтернĕ колхозсем ирхи çĕртме сухи тума тухрĕç. Чурачăк ялсоветне кĕрекен «Радио» колхоз 20 гектар, Ямашри «Союз» колхоз 30 гектар ирхи çĕртме тунă. Тутарла Кăнаш ялсоветĕнчи «КИМ» колхоз 7 гектар ирхи çĕртме сухи сухаланă. Ирхи çĕртме сухине Паваркасси ялсоветне кĕрекен колхозсем те пурте тытăннă.

Заемсенчен илнĕ доходсем выранти бюджетсем валли

Пуринпĕн те пăлла, государство заемĕсенчен пухăнакан средствăсен чылай пысăк пайне хуласемпе ялсенчи хуçалăхпа культура строительстви валли выранти бюджетсене уйăрса параççĕ. 1940 çул хушшинче çавăн пек отчисленисенчен республикăсенчи тата вырансенчи бюджетсене 5 миллиард та 290 миллион тенкĕ пухăннă.

Кăçалхи çулăн пирвайхи виçĕ уйăхĕ хушшинче, СССР Наркомфинĕн даннăйĕсем тăрăх, выранти бюджетсене 530 миллион тенкĕ ытла пухăннă: РСФСР тăрăх—360 миллион тенкĕ ытла, Украина ССР тăрăх—96 миллион тенкĕ, Белоруссри тăрăх—15 миллион, Грузи тăрăх—10 миллион, Казах ССР тăрăх—12 миллион тенкĕ т. ыт. те.

Пĕрремĕш тираж

Виççĕмĕш пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) заем выигрышĕсен пĕрремĕш тиражĕ июнĕн 7—8-мĕшенче Петрозаводск хулинче пулса иртет. Çак тиражра 172.463.200 тенкĕлĕх 1.104.000 выигрыш пулать. Çакăн пек нумай выигрыш халиччен кăларнă заемсен пĕрремĕш тиражĕнче нихăшинче те пулман-ха.

Арктикăри пăрсем тĕлĕнче 400 сехет хушши вĕçсе çӳренĕ

Майăн 27-мĕшĕнче, полярти çĕнĕ станцисене организацилес тĕлĕшпе пуçланă операцисене туса пĕтернĕ хыçăн, полярти летчик А. Н. Тягунин тытса пыракан «СССР Н-171» самолет Арктикăран Мускава вĕçсе таврăннă.

Ирхине 6 сехетре, хăйĕн машини çине 32 пассажир лартса, вăл Амдермăран Архангельска вĕçсе тухнă. 4 сехет те 20 минута иртсен «ССС Н-171» самолет Архангельскри аэродрома çитсе ларнă. Кăнтăрла самолет каллех сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ, Мускав еннелле çул тытнă.

Арктикăри хĕллехи сывлăшри навигаци тапхăрĕнче Тягунин юлташ «СССР Н-171» самолетпа вĕçсе, пурĕ 70 пин километра яхăн çул тунă. Унăн самолечĕ Арктикăри пăрсем тĕлĕнче 400 сехете яхăн вĕçсе çӳренĕ, вăл шутран 100 сехетне полярти каç условийĕсенче ирттернĕ. Хăюллă вĕçевсене ирттерме çанталăк лайăхах пулман, анчах та «СССР Н-171» самолетăн экипажĕ задание питех те чаплăн пурнăçа кĕртнĕ, мĕнпур чăрмавсене ăнăçлăн çĕнтерсе тухнă. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Лермонтов кунĕсене ирттерме хатĕрленес ĕç

М. Ю. Лермонтов ятне ĕмĕрех асăнмалла тăвас тата вырăссен аслă поэчĕ вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри Комитет юбилей ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен календарлă планне çирĕплетнĕ.

Сталинла преми лауреачĕ Н. Н. Асеев председатель пулса ертсе пыннипе ирттернĕ ларура чылай организацисен пĕлтерĕвĕсене итленĕ. Июнĕн 10-мĕшпе 20-мĕш хушшинче М. Ю. Лермонтова асăнса СССР Наукăсен Академийĕн отделенийĕсемпе институчĕсен сессийĕсене ирттереççĕ, июнĕн 26-мĕшпе 29-мĕш хушшинче СССР Наукăсен Академийĕн чаплă ларăвĕ пулать.

Сентябрь уйăхĕнче, вĕренӳ çулĕн пуçламĕшĕнче, çĕршыври шкулсенче Лермонтов декадине ирттереççĕ: утренниксем, литературăллă вечерсем тата поэт произведенийĕсене чи лайăх вулакансемпе иллюстрацилекенсене паллăртас тĕлĕшпе конкурссем пуласçĕ. Çуллахи уйăхсем хушшинче культурăпа кăнăу паркĕсенче, аслă шкулсенче тата районсенчи клубсенче художествăллă вечерсем, вырăссен аслă поэчĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен лекцисемпе докладсем ирттерме йышăннă.

(ТАСС).

ВЫСТАВКĂРА

Майăн 27-мĕшĕнче ирхине 10 сехетре, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин хапхи татах тепĕр хут анлăн уçалнă. Выставкăна Новосибирск, Иркутск, Молотов, Омск облаçĕсенчен, Алтай крайĕнчен, Удмурт АСС Республикинчен колхозник-экскурсантсем килнĕ. Кăнтăрла Советлă Эстонирен экскурсантсен виççĕмĕш группи, Украинăн хĕвеланăç облаçĕсенчи, Киргиз республикинчи тата Çурçĕр Казахстанри колхозниксен делегацийĕсем килсе çитнĕ. Вунпăр пин çын выставка двореçĕ-павильонĕсене савăнса тĕлĕнсе курса çӳренĕ.

Молдаван ССР павильонĕпе Советлă Прибалтикăри республикăсен павильонне курма пыракансем пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ. Виçĕ кун хушшинче Литва, Латви тата Эстони павильонне 8 пине яхăн çын пырса курнă.

«Ленинград и Северо-Восток РСФСР» павильонра та çын нумай пулнă. Кунта Белоруссирен, Украинăн хĕвеланăç облаçĕсенчен, Çĕпĕртен, Башкирирен килнĕ ханасем кĕрсе курнă. Каçхине Ленинград облаçĕнчи ĕççыннисем валли павильонран ятарласах радиопередача панă. Микрофон умĕнче Красносельски районри «Роте Фане» колхозри (Ленинград облаçĕ) зоотехник Пасовский юлташ сăмах тухса каланă.

«Дальний Восток» павильон умне «уйхирсенчен килнĕ хыпарсен» хăмине кăларса тăратнă. Çак хăма çине кашни кунах выставка участникĕсенчен илнĕ телеграммăсене кăларса çакаççĕ. Биробиджанран çапла пĕлтернĕ: Киров ячĕпе тăракан колхоз — выставка участникĕ — Еврей автономлă облаçĕнче пуринчен те малтан çурхи культурăсене акса пĕтернĕ. «Механизация» павильонра çĕнĕ экспонат — çурçĕр енче усă курмалли комбайн — кăларса тăратнă. Модернизацияленĕ автомобильсемпе газогенераторлă трактор-сене вунпăр пин экскурсант пырса курнă.

Выставка кашни кун ытларах та ытларах ешĕлленсе пырать. Пилеш йывăççисем симĕсленнĕ, хурăнсем çинче пирвайхи çулçăсем çурăлса тухнă. Тепляксенче черешня тата чей çырли чечеке ларнă.

* * *

Академик Н. В. Цицин çырнă «Всесоюзная сельскохозяйственная выставка 1941 года» ятлă кĕнеке пичетленсе тухнă. Кĕнекене сутма пуçланă. Çак кĕнекере выставка участникĕсем çинчен, социализмлă ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă. Карело-Финн тата Молдаван СС Республикисен павильонĕнчи экспонатсене ятларласах уйрăм разделра кăтартса панă.

(ТАСС).

ССР Союзĕнчи кинофикаци 1941 çулта

Пирĕн çĕршывра кинофикацилес ĕç çине питех те пысăк тимлĕхпе пăхаçç. 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне Совет Союзĕнче 30 пине яхăн киноустановки пулнă, вĕсенчен 20 пине яхăн установки—ялла вырăнсенче. Мĕнпур киноустановкăсен тăватă пайĕнчен пайĕ—саслă установкăсем. Кунсăр пуçне кинопередвижкăсем 10 пин передвижка ытла ĕçлеççĕ.

Кино çĕршывăн чи инçетри районĕсене—Вăтам Азири пушхирсене, Памир тăвăсем çинчи ялсене, полярти станцисене сарăлса пырать. Иртнĕ çулта 17 пине яхăн киноустановка 678,3 миллион çынна кино кăтартнă.

Кăçалхи çул çĕнĕрен тăвакан 8 пин киноустановкăна ĕçе ямалла, вĕсем саслă установкăсем пуласçĕ. 28 хулара тата ялсенчи 44 район центрĕсенче киотеатрсен çĕнĕ çурчĕсене тăваççĕ. Вĕсенче техникăн чи юлашки çитĕнĕвĕсем тăрăх туса хатĕрленĕ оборудованисем пуласçĕ. Кăçалхи çул вĕçтĕлне Литвара, Латвире тата Эстонире 397 киноустановка пулать. Чи лайăх фильмсене 16 тĕрлĕ чĕлхе çине, вăшутрах советлă çĕнĕ республикăсенчи халăхсен чĕлхисем çине куçарса кăларaçç.

ВКП(б) Обкомĕнче

Альгешри территориллĕ пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсем çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Шупашкар районĕнчи Альгешри территориллĕ пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсем çинчен отчет итлерĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Альгешри территориллĕ пуçламĕш парторганизации государствăллă заданисене тултарас, çавăн пекех хуçалăхлă залачăсене татса парас ĕçре начар мар ĕçленине палăртрĕ. Ялсовечĕ финанс планне тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе малта пырать. Колхозсем 1941 çулти сураки вăхăтра хатĕрленсе тухнă.

Альгешри пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсем колхоз производствинче тата учрежденисенче малти ретре пыраççĕ. Коммунистсен çемьисем производствăра примерлă ĕçлеççĕ, колхозсен ĕçне активлăн хутшăнаççĕ, ĕçкунĕсем нумай тунă.

Партин пуçламĕш организацийĕ 2—3 кун хушшинчех Осоавиахимăн 15-мĕш поторей билетне вырнаçтарса çитернĕ, Наркомпросăн лекционнăй бюровĕ енĕпе колхозсенче лекцисем ирттерес ĕçе организацилессине активлăн хутшăннă.

Çаксемпе пĕрлех пуçламĕш парторганизацин ĕçĕнче паллă çитменлĕхсемех пур. Парторганизаци ялсоветра, колхозсенче, тĕрĕ тĕрлекен артельте ĕçлекен коммунистсенчен партине совет органĕсен директивлă кăтартăвĕсене вăхăтра тултарассишĕн ответлă пулма çителĕксĕр ыхтнă. Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман. «Паха тĕрĕ» промысла артелĕ çĕвĕ çĕлекен цех тăрăх кварталран кварталрах плана тултаймасть. Вулав çуртне йĕркелемен, унта ĕç япăха кайнă. Шкулсенче классем тата сĕтел-пукансем çителĕклĕ мар. Хутла сахал пĕлекенсене вĕрентмеççĕ. Трахома чирĕнчен сыватасси çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ.

Парти организацинче партиллĕ тата государствăллă дисциплинăна пăснă фактсем пур (Андреева, Павлов). ВКП(б) членĕн кандидачĕ Кольцов Долгаша, ĕçсе çурĕнĕшĕн, хăйĕн обязанноçĕ çине çиелтен пăхнăшăн колхоз председателĕнчен кăларнă. Кандидатсене воспитани парас ĕçе çителĕксĕр лартнă. Пуçламĕш парторганизацинчи 5 кандидатăн та кандидат стажĕ иртсе кайнă. Агитаторсем хушшинче те çителĕклĕ ĕçлени пулман.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Альгешри территориллĕ пуçламĕш парторганизации секретарьне Максимов юлташа ялсовечĕн, шкулăн, вулав çурчĕн, ялти кооперативăн ĕçĕсене лайăхлатассишĕн куллен ĕçлеме хушса хăварнă. Çавăн пекех колхозсене, промысла артельне, вĕсенче ĕçлекен коммунистсем урăла, ертсе пыракан парторганизацине ирттемелле, партине правительствăн директивисене вăхăтра пурнăçа кĕртме ыйтмалла, коммунистсен производствăри рольне татах çулĕ çĕклемелле.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕн Максимов юлташăн коммунистсен идейăпа политикăллă шайне тата политикăллă активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле. Коммунистсене поручениесем памалла, партиллĕ тата обществăллă ĕçе активлăн хутшăнтармалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизацине СССР Совнаркомĕне ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен тата партипе правительствăн ытти решенийĕсем çинчен колхозниксене куллен ăнлантарса пама хушнă. Çак постановлениесем колхозсенчи, бригадăсенчи, звеносенчи, фермăсенчи агитациллĕ ĕçре тĕп вырăнта пулмалла.

Пуçламĕш парторганизацин колхозри лекторине яланах ĕçлеттерме тăрăшмалла. Альгешре лекторий туни лайăх пулнине палăртса, çак ĕçе ытти районсене те сармалла, тесе шутлать ВКП(б) Обкомĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизацине черетлĕ пухусенче хăйсен пухăвĕсене йышăннă решенисемпе ертсе пыракан парторгăнсен решенийĕсене пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăма хушнă.

Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулти физика урокĕнче. Сĕтел умĕнче — преподаватель Е. К. Баранов юлташ.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Призыва лайăх хатĕрленеççĕ

ÇЕРПУ. **(Хамăр корр.).** Кăçалхи призыва кăтартуллăн хатĕрленсе ирттересшĕн 27 ялсовет тата пĕтĕм призывниксенчен 90 процент ытла пĕрпĕринне ăмăртса ĕçлеççĕ. Районри çар комиссариачĕ Шупашкар районĕнчи çар комиссариачĕпе социализмлă ăмăртăва тухнă.

Ăмăртури малтанхи результатсем район призыва иртнĕ çултинчен лайăхрах хатĕрленсе пынине кăтартаççĕ. Трахома чирĕпе чирленĕ нумай призывнисене сыватса çитернĕ. Хальхи вăхăтра 4 çын сывалма çӳреççĕ. Приписка вăхăтĕнче хутла сахал пĕлекенсем 12 призывник пулнă. Вĕсене район центрĕнче организациленĕ шкула пухса вĕрентсе кăларнă. Çураки вĕçленнĕ хыççăн çак призывниксене çар комиссариачĕпе районри çутĕç пайĕ вунă кунлăх семинара пухса, вĕсен пĕлĕвне татах та ӳстереççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн ретне кăçал хутла лайăх пĕлекен, çирĕп сывлăхлă, политикăна лайăх пĕлекен çамрăксем каяççĕ. Призывниксем хушшинче вăтам шкулта вĕренсе тухнисем 35 процент, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем 40 процент шутланаççĕ. Нумай призывниксем нормăсем парса оборона значокĕсем илнĕ. Хĕл вăхăтĕнче йĕлтĕрпе ярăнса 1-мĕш ступеньлĕ «ГТО» значокĕн нормине 96 процент тата 2-мĕш ступеньлĕ «ГТО» значокĕн нормине 41 процент панă. Хальхи вăхăтра «Ворошиловский стрелок» значокне илнисем 40 процент, «ГТО» значокне илнисем—22, «ПВХО»—94 процент тата «ГСО» значокне илнисем 96 процент ытла шутланаççĕ. Мĕнпур призывниксен шутĕнчен 34 процент 4-шар оборона значокĕ тата 60 процент 3-шер оборона значокĕ илнĕ.

Хĕллехи вăхăтра призывниксем Осоавиахим организациленĕ командăсенче çар ĕçне вĕреннĕ. Малашне районра пур призывниксене те оборона значокĕсен нормисене партарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнаççĕ.

Тутарла-Кăнаш, Рындино ялсовечĕсем призыва лайăх хатĕрленсе пынине палăртмалла. Ку ялсовечĕсенчи призывниксенчен чылайăшĕн 4-шар оборона значокĕ пур.

Вăтам шкулсенчен кăçал вĕренсе тухакан çамрăксем килес кĕркунне призыва тăраççĕ. Ялхуçалăх техникумĕнче (военрук Михайлов юлташ) çар ĕçне вĕрентессине уйрăмах лайăх организациленĕ. Кунта призывниксен пурин те 4-шар оборона значокĕ пур. 90 процентчĕ — комсомолецсем. 8 призывник «ПВХО» тата «ГТО» значокĕсен иккĕмĕш ступеньлĕ нормисене парса инструктор ятне илнĕ. Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕрленекен çамрăксем вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ. Отличниксем (вĕсем стипенди илеççĕ) 7 çын, ударниксем 5 çын шутланаççĕ.

Призыва тăма хатĕрленекен çамрăксем хушшинче 53 процент ытла комсомолецсем. Осоавиахим организацилеснĕ командăсенче 26 çын пулеметчиксем хатĕрленĕ. 10 çын трактор ĕçне вĕренсе тухнă.

Районра Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар Флочĕн призывне кăтартуллăн хатĕрленсе ирттернĕшĕн пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав тăвасси çинчен кăларнă Указа районра пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç.

Районри çар комиссарĕ — старший политрук Бурков юлташ:

— Призыва хатĕрленес тĕлĕшпе халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса тăмастпăр. Малашне татах та лайăхрах ĕçлесе, призыва кăтартуллăн ирттерме хатĕрленетпĕр, — тет.

Т. МАЙОРОВ.

Агитаторсем çуракинче

ИШЛЕЙ. Çураки вăхăтĕнче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелес тĕлĕшпе çуракине тухиччен парти райкомĕ организацийĕ ĕçсем чылай ирттерчĕ. Агитаторсен составне пăхса тухнă, политикăллă агитаци ĕçне çĕнĕ сынсене хутшăнтарнă.

Агитколлектив лайăх ĕçлесси унăн руководителĕнчен килнине шута илсе, парти райкомĕ агитколлектив руководителĕсен семинарне ирттернĕ. Семинарта çураки вăхăтĕнче агитколлективсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен, политикăллă агитаци ĕçне бригадăсене, звеносенче туса пымалли çинчен ĕплĕн калаçа ăнлантарнă.

Çураки вăхăтĕнчи политикăллă агитаци партипе правительствăн решенийĕсене кашни колхозника тата колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса парас енĕпе пулса шыч.

Хальхи вăхăтра районĕпе 32 агитколлектив, вĕсенче 537 агитатор. Куçмĕр пуçне, колхозсенчи, бригадăсенчи стена хаçачĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне кулленех туса пырас тĕлĕшпе пысăк пулăшу параççĕ. Çуракине тухнăранпа ВКП(б) райкомĕ 17 агитколлектив ĕçĕсене тĕрĕслесе тухрĕ. Агитаторсем, беседчиксем тата стена хаçат редакторĕсемпе вулавçăсем колхозниксем хушшинче тĕрлĕрен ыйтусем тăрăх докладсемпе калаçусем ирттереççĕ. Мамăшри, Шетмĕпуçĕнчи, Кибечкассинчи агитколлективсем уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ. Çак агитколлективсенчи агитаторсем бригадăсенче, звеносенче кашни кунах тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Кунта стена хаçачĕсем те йĕркеллĕ тухса тăраççĕ.

«Çĕнĕ хунав» колхозри стена хаçачĕ çураки умĕн уйăхра пĕрре е икĕ номер тухса тăнă. Çураки вăхăтĕнче 4—5 кунта пĕр номер тухса тăрать. Çавăн пекех бригадăсенчи стена хаçачĕсем те вăхăтра тухса тăраççĕ. Стена хаçачĕсем колхозăн, бригадăсен ĕçĕсене тĕплĕн çутатса, çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтерме пулăшаççĕ.

И. ВИНОКУРОВ.

Квалификацийлĕ рабочисен çĕнĕ отрячĕ

ÇЕМЕРЛЕ, майăн 26-мĕш. **(Телефон тăрăх, хамăр корр.).** ФЗО шкулĕнче испытанисем вĕçленчĕç. Вĕренекенсем испытанисене пурте пачĕç. Шкултан пурĕ 198 çын вĕренсе тухрĕ. Вĕсенчен 67 çын «отлично» паллăпа, 40 çын похвальнăй грамотăпа вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнисем хушшинче — 40 плотник, 40 слесарь, 40 рамщик, 40 электромонтер тата 38 станочник.

Отлично вĕренсе пынисем пысăк разрядсем илме пултарчĕç. Рамщиксен группинче 14 çын 7-мĕш разряд илме тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем хушшинче комсорг Комаров, комсомолецсем Ногтев, Тонышев т. ыт. те.

Хĕр. ЛИСИН.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем

Истори предмечĕпе

Вуннăмĕш класра вĕренекенсем майăн 26-мĕшĕнче истори предмечĕпе испытани тытрĕç. Стенасем çинче тавраллах çулталăк хушшинче усă курнă историллĕ тата географиллĕ карттăсем, тăван çĕршывăн ӳсĕмĕсене кăтартакан диаграммăсем, тĕрлĕрен вĕренӳ пособийĕсем. Кунта ăнтĕ — пĕтĕм тĕнче карттийĕ! Сĕтел умĕнче комисси членĕсем, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн представителĕсем.

— Ку ăнтĕ кăштах хумхантарать, анчах программа тăрăх мĕн вĕреннине пăхса тухсан, нимĕнех те мар пек. Пурне те аванах каласа парассăн туйăнать, — теççĕ вĕренекенсем.

Чăн малтан К. Салеров ответлерĕ. Вăл Столыпинăн шалти политики çинчен, унтан граждан вăрçи вăхăтĕнче шурă поляксен çарне çĕмĕрсе тăкни çинчен, юлашкинчен, ĕçхалăхне Октябрьти социализмлă Аслă революци панă правăсем çинчен каласа пачĕ. Каласа панă май, вăл карттă тăрăх кăтартмалли вырăнсене лайăх та йĕркеллĕ кăтартса пычĕ.

Отличник Осипов партин XVIII съезчĕ çинчен, унтан империализмлă пĕрремĕш вăрçă пуçланнин çăлтавĕсем çинчен пĕр такăнмасăр каласа пачĕ. Унăн ответчĕсенчен çакă курăнчĕ: Осипов испытанисене хатĕрленнĕ чухне истори учебникне вуланипех лăпланман, вăл ытти литературăна юратсах вуланă. Çакăн пекех, Петрова, Сычева тата Васильева хăйсен ответчĕсене пĕр йăнăшсăр каласа пачĕç. Вĕренекенсем час-часах хăйсен ответчĕсене, кирлĕ пулсан, литература, искусство, наука ыйтăвĕсемпе е вăл енĕпе ĕçлекен чаплă çынсен ĕçĕсемпе çыхăнтарса каласа пама тăрăшаççĕ. Ку вăл — пит аван, мĕншĕн тесен ачасем предмета ытти обществăллă ыйтусенчен уйăрса мар ăнланаççĕ. Пурнăçра пурте пĕр-пĕринпе çыхăнуллă.

Преподаватель Николаев юлташ ачасен пĕлӳне, вĕсен тавра-курăмне ӳстерес енĕпе нумай ĕçленĕ. Ку çакăнтан та аван курăнать: вĕренекенсем истори предмечĕпе конспектсене йĕркеллĕ çырса пынипе пĕрлех, историпе çыхăнса тăракан интереслă ыйтусене вĕренсе çырса пымалли уйăрăм тетрадь тунă.

Анчах çакна та каламалла. Вĕренекенсенчен хăшĕпĕрисем ответсене тулли, витĕмлĕн калаймаççĕ, ответленĕ çĕртех, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна сиксе ӳкеççĕ. Çакăн сăлтавĕ вĕренекенсем ыйтусене паянхи кунхи пурнăçпа çыхăнтарма сахал пĕлнинчен те килет.

II. вĕренекен «уйрăмăн илнĕ пĕр çĕршывра социализм тума пулать-и?» текен ыйту çине ответ пама пултараймарĕ. Унăн пулсан, апла та, капла та.

В. вĕренекен партин XVIII конференцийĕ çинчен каласа пама ыйтсан, конференци хăçан пулса иртнине каласа параймарĕ. Конференцинче мĕнле ыйтусем пулнă?—тесе ыйтсан, вăл тĕлсĕр ответ пачĕ. Ăна аса илтерес тесе, ассистентсем конференци уменĕн производствăри çĕкленӳсем çинчен каласа пачĕç. В. çаплах аса илеймерĕ.

С. хĕрача пур ыйту çинчен те каламасть тăчĕ, анчах пĕрне те тĕплĕн калаймарĕ. Вăл «пĕтĕмĕшех» пĕлет иккен, анчах тĕплĕн, уçăмлăн каласа параймасть. Çавăнпа ăна «плохо» лартса панă.

Класри 23 ачаран 13 «отлично», 4 «хорошо», 4 «посредственно», 1 «плохо» илнĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Шупашкар, 3-мĕш №-лĕ вăтам шкул.

Союзлă республикăн столицине шыраса...

(Географипе пулнă испытанире)

ЭЛЕК. Туллимар вăтам шкулти IV класăн стенисем çумĕнче ССР Союзĕн карттисем çакăнса тăраççĕ. Класра юлашки предметпа — географипе пĕлӳ тĕрĕслевĕ пырать.

География картти умĕнче шкулта вĕренекен Е. тăрать. Унăн пĕр аллинче указка, тепĕр аллинче билет.

— Каунас хули хăш союзлă республикăн столици?

Е., билет çинчи малтанхи ыйтусем çине тĕрĕс ответ панăскер, тытăнса тăрать. Географи предмечĕпе вĕренекен учитель карттă патне пырса, çĕнĕ союзлă республикăсен столицисем çине пăхса, тĕлĕнсе хăйĕнчен хăй ыйтать:

— Каунас Литва республикин столици мар-ши?

Вăл вĕренекене урăх ыйту парать.

— Апла пулсан Карело Финн союзлă республикин столицине кăтартса пар?

Унтан Балти тинĕсĕ хĕрринчи ытти союзлă республикăсен столицисене пăхса тухнă май, вĕсем каллех Литва республики çинче чарăнса тăраççĕ.

«Хăшĕ ĕнтĕ кунта столица»?—ыйтать вăл.

Ку карттă çинче союзлă республикăсен столицисене хĕрлĕ çăлтăрпа паллă тунă. Каунас хулин ун пек паллă çук. Кирилл Иванович — географи предмечĕпе вĕренекен учитель—тепĕр хут карттă патне пырса, тинкерсе пăхать. Хăй те çакăн чухне тин Литва союзлă республикин столицине—Вильнюс хулине тупать.

Кирилл Иванович тĕлĕнсе, ачасене çапла каласа парать:

— Кивĕ карттă çинче унăн столици билет çинче кăтартнă пекехчĕ, союзлă республика тунă хыççăн столицăна Вильнюс хулине куçарнă пулмалла...

Çак факт акă мĕн çинчен калать. Йăлкăшри туллимар вăтам шкулти учительсем хамăр çĕршывра тата ютçĕршывсенче пулса пыракан событисене сăнаса пымаççĕ. Çавăнпа та çакăн пек кӳрентерекен фактсем пулаççĕ.

И. МОСЕЕВ.

Шкул участокĕ—пĕтĕм ялшăн пример пулмалла

Йывăçсем лартрĕç. Сталинори (Çĕрпӳ р.) туллимар вăтам шкулта шкул участокне йĕркене кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Участок çине кăçал 130 тĕп çырла йывăççисем тата илемлĕ йывăçсем лартса хăварчĕç. Йывăçсене çуллахи вăхăтра астуса тăма шкул ачисем хăйсем çине илнĕ.

А. МИХЕЕВ.

Участок йĕркеленет. Хутарти (Çĕмĕрле р.) вăтам шкулăн участокĕнче кăçалччен йĕркелĕх пулман. Кăçал юр кайсанах участок тавра лайăх карта тытса лартнă.

Халĕ ĕнтĕ шкул участокĕ çине йывăççем чылай лартса хăварчĕç. Йывăççене лартнă çĕрте шкул ачисем хăйсем те тăрăшса ĕçлерĕç. Кунтах тата физкультура площадки пулать.

С. БАТЬКОВ.

Советсен Дворецĕ

Наукăсен Академийĕн Волхонкăри пĕр пысăк залĕнче кашни кунах тулли халăх. Тĕрлĕ профессиллĕ çынсем пулать: инженерсем хушшинче художниксем, студентсем, писательпе юнашар Казахстан колхозникĕ, Донбасс шахтерĕ. Унтах учитель, агроном, артист, красноармеец. Кунтах ютçĕршыв çыннисене те курма пулать. Малта, трибуна çинче, профессор. Вăл лекци вулать.

Пĕтĕм сăмах этемлĕхĕн ĕмĕрхи искусствин культури çинчен пырать. Кунта эсĕ авалхи гобелен искусстви, Ренесанс фрескипе Палех мастерлăхĕ, Рудий пултарулăхĕпе Флоренцин мозаикăвĕ чиперех ерешĕсем, Византин мозаикăсем çинчен илтме пултаратăн. Кунтах Хеопс пирамичĕсемпе авалхи Рим дворецĕсем, тĕнчен хальхи пысăк курчĕсемпе вĕсен техники, вĕсенчен те ытларах, Советсен пулас Дворецĕ çинчен каласа параççĕ, тĕрĕсрех калаçăн, кунти пĕтĕм сăмах Советсен Дворецĕ тавра саврăнать.

Лекци пуçланиччен нумай малтан çухăнакан çынсем, кайран, лекци пĕтĕнте те, час саланса пĕтмесĕр—пурте çуречĕсем умне кĕпĕрленсе тăрса хăйсен умĕнчи аслă строительствăн панорамине пăхаççĕ.

Елĕкрех, Пушкин вăхăтĕнче, кунта монастырь пулнă. Монастырĕн пĕр çуртĕнче ун чухне пĕр вăхăт Пушкин çусĕ — Адам Мицкевич пурăннă. Унăн та елĕкрех, 18-мĕш ĕмĕрте, кунти киркăсен Иван Грозный Кремль çине пăхса тăма юратнă. Нумай пулмасть çу вырăнти 19-мĕш ĕмĕрте 44 çул çуллăн тунă темиçе тăрăллă чиркӳ, Тарас Шевченко калашле, шыçмак çурчиха пек, Христос-Спаситель храмĕ çавăрнă. Халь ун вырăнĕнче, строительствăн çӳллĕ хӳмисен шал енче бетонлă пысăк çынкă. Вăл Советсен Дворецĕн никĕсĕ. Ана тума тытăниччен 1933 çулта ку вырăна тĕпчесе вĕренес ĕç пынă. Геологсем 110 метр тарăнăш сĕве шăтарса кĕрсе нихăçан çын аллине ăмĕ пултарман çĕр варринче кĕрсе ӳнченĕ. Унтан вара 1935 çулта никĕс хурас ĕç пуçланнă. Никĕс — пĕтĕм строительствăн чи ответлă тапхăрĕ, ĕмĕрхи дворецăн пуласлăхĕ. Кунашкал никĕсе истори те, тĕнче те пĕлмест. Тĕнчери хальхи чи çӳллĕ çуртсенчен Америкăри çĕр пĕр хутлă — 407 метрлă Эмпайр стэтс билдинк никĕсĕ хăй çинче 57 пин тонна тытса тăрать. Сан-Францископа Окленд хушшинчи 13 километрлă «Золотые ворота» кĕпере тунă çĕре 190 пин тонна хурçă кайать. Хальхи вăхăтра тĕнчери ку чи йывăр сооружени. Советсен Дворецĕн пĕр тĕп каркасне тума кăна пурĕ 350 пин тонна хурçă кирлĕ, пĕтĕм дворецĕ вара 1.500 пин тонна йывăрĕш пулать — Парижри 300 метрлă Эйфелев башнинчен 20 хут йывăртарах.

Çакнашкал йывăрлăха чăтма пултаракан тата пин-пин çулсем пурăннăмлăх никĕс халь хатĕр. Вăл бетонлă икĕ цилиндртан тăрать. Пĕр цилиндрĕн диаметрĕ 140 метр, теприн — 160. Пĕчĕкрех цилиндрне пысăкки ăшне тăхăнтарнă. Иккĕшĕ вара цилиндрлă никĕс пулса çĕре 20 метр тарăнăш кĕрсе вырнаçнă. Ăна 1938 çулта, виçĕ çулта туса пĕтернĕ. Дворецăн хĕвеланăç енчи каркасĕ халь çĕр айĕнчен çĕр çине тухрĕ. Ерипен çаврăна-çаврăна ĕçлекен пысăк деррик-крансем çинче тата вĕсен стрелкисем айĕнче тĕп каркасăн колоннийĕсем çĕрелле «башмаксем» пулса кĕнĕ çĕрте ĕçлекенсем аякран, Наукăсен Академийĕнчен, пăхсан кайăксем пек вĕттĕн, пĕр вĕçĕмсĕр килсе, тухса каякан грузовиксем ачасен вылямалли машинăсем пек курăнни умра мĕнтери пысăк строительство пыни çинчен каласçĕ.

Советсен Дворецĕн строительстви этемлĕх пĕлекен строительствăсенчен чи пысăкки — вăл 12 гектар таран вырăн йышăнать. Апла пулсан унта ĕçлекенсен хисепĕ те ытларах пулмалла пек. Тĕрĕссипе кунта ĕçлекенсен шучĕ Христос-Спаситель храмне тунă çĕртинчен те темиçе хут сахалтарах. Строительствăн хăйĕн бетон хатĕрлекен завод пур. Унта кашни еменăра 4 çын, тĕп ĕçсене туса пырса, дворецăн тума кирлĕ пĕтĕм бетона — пурĕ 500 пин кубометр хатĕрлеççĕ. Строительствăн чи пысăк каркасне монтажланă чухне те 1.300 çынран ытла пулмасть.

Строительство ĕçĕ халь çĕр çине тухса çӳлелле çĕкленчĕ, терĕмĕр. Ку вăл пĕртте çĕр айĕнчи ĕçĕпĕтнине пĕлтермест. Дворецăн тĕп каркасĕ те çĕр çине тухсах çитеймен-ха. Уйрăмăнах кунта халь çав тĕп каркасăн ĕçне вĕçлесси хĕрӳллĕн пырать.

Тĕп каркас — дворецăн шăмшакки, ун çинче Ленинăн 100 метрлă скульптури тăмалла. Çак, 350 пин тоннăллă тĕп каркас икĕ цилиндрлă никĕс çине иккĕшер рет юнашар лартса тухнă 64 колоннăсенчен пуçланса каять. Кашни колонна çине çӳлтен 15 тоннăллă пусăм пулать, кашниех вĕсем 120 тонна туртакан 3,6 метр хулăмăш колоннăсем. Никĕс çине вĕсем 10 метр таран сарăлса «башмаксем» пулса çирĕпленеççĕ, çӳлелле 60 метр çӳлĕш тӳрĕ хăпараççĕ те, каркасăн вăта çĕрнелле тайăлса тӳпенелле 80 метр çĕкленсе, аслă залăн шатерне тăваççĕ. 140 метрта каркас каллех тӳрленсе тата çӳлелле çĕкленет. Сывлăшри пĕтĕм ĕç деррик-крансем çинче пулса пырать. Çавнашкал крансем çӳлелле улăхнăçемĕн сахалланса пырса, юлашкинчен чи çӳлти, çăмăр пĕлĕчĕсем лешъенчи ĕссене тунă чухне пурĕ те икĕ кран тăрса юлать. Ку ĕссене тума тытăниччен çĕр айĕнчи, çĕр çинчи ĕç те нумай-ха. Строительство площадкинчи ĕç мĕнтери тимлĕн пынине аякран мар, сывăхран та курма çук. Ĕçлекенсене кунта сайра тĕлсенче çеç куратăн. Елĕк çын тунă ĕçе çурри ытла халь машина тăвать. Çынсем машина тума пултарман ĕçе çеç тăваççĕ, ку вăхăтра вĕсем нумайăшĕ çĕр айĕнче ĕçлеççĕ.

Вĕсен çĕр айĕнчи ĕçĕ ответлă тата пысăк. Кунта вĕсем Сивка тата Черторья юханшывĕсемпе, ĕмĕрхи сăйăсемпе тĕл пулаççĕ. Кунта, çĕр айĕнче, дворец тавралах метро пулать, дворецĕ айĕнче хăйĕн çĕр айĕнчи тĕнчи. Çав тĕнче икĕ хутлă пулать. Аялти хучĕн урайĕ Мускав шывĕнчен 2 метр çӳлерехре 12 гектар йышăнать. Кунта дворец таса, уçă сывлăш парса тăракан сывлăш фабрики, радиограф, телефон, насос станцисемпе тĕрлĕ складсем. Варĕнче трюм. Иккĕмĕш хутĕнче ик енĕпе Карл Маркспа Фридрих Энгельсăн пысăк памятникĕсем. Кĕрсенех эсĕ пысăк залăн 6 ылттăнлă-мраморлă пилонĕсем çинче Сталин юлташ Ленин тупăкĕ умĕнче тупа туса калана сăмахсене вулатăн. Унтан вара, колоннадăран шалалла, мозаикла панносемпе, фрескăсемпе, Совет Союзăн чаплă çыннисен барельефĕсемпе илемлетнĕ вестибюльсемпе фонсем, анлă коридорсем, Сталинла Конституцин, орденсен тата граждан вăрçинпе социализмлă строительствăн героикăллă залĕсем. Вĕсенче Верховный Советăн палатисем, унăн Президиумĕ ĕçлемелле, кунтах пысăк архив, библиотека пулать. Вĕсемсĕр пусне тата кунта икĕ зал: пĕри—«Пĕчĕк» зал. Ун пысăккишĕ 120 пин кубометр, вăл 6 пин çын йышăнать. Кунта конференцисем, пленумсем, тĕрлĕ тĕлпулусемпе пухусем пулса иртмелле. Тепĕр залĕ—Пысăк зал. Кунта 21 пин çын вырнаçмалла. Залăн çӳллĕшĕ 100 метр, урлăшĕ—130, пысăккишĕ вара — пĕр миллион кубометр. Кунта Америкăри 26 хутлă небоскреб шăнăçма пултарать.

Кунта пĕтĕм çĕршывăн çыннисем çеç мар, тĕнче ĕççыннисем хăйсен конгресĕсене, съезчĕсене, чаплă пухăвĕсене пухăнмалла. Ун пек чухне партерлă, амфитеарлă, балконсемлĕ скульптурăсемпе, живописемпе илемленнĕ зал паха креслăсемпе пухăнса ларать. Малта, партертан нумай çӳлте, терраса—президиум вырăнĕ. Унăн стенисем граждан вăрçин, индустрипе колхоз строительствин эпизочĕсенчен илсе çырнă барельефсемпе кĕрнекленеççĕ. Кунтах Ленинăн 8 метрлă скульптури. унпа пĕрле Мускав рабочийĕ, грузин-пахчаçă, якут-сунарçă, Украинăна колхозникĕ. Президиумăн пĕр енче ютçĕршывсен, тепĕр енче хамăр государствăн прессисен вырăнĕсем, кăшт малăрахра—правительство членĕсен вырăнĕ, тата малта, аялăрахра—трибуна. Оратор, калăпăр, хăйĕн сăмахне сана ăнланмалла мар чĕлхепе калать. Умăнти наушник, радио сана ăнланмалла чĕлхепе каласа парать. Кунта вырăса та, грузина та хăвăн тăван, ăнланмалла чĕлхепе итлеме пулать—ăна трибуна умĕнче никама курăнмалла мар ларакан тăлмачсем куçараççĕ.

Пĕтĕм зал зонăсем çине пайланать. Шăрăх Узбекистанран е Абхазин ешĕл айлăмĕнчен килнĕ çын кунта хăйĕн çанталăкне асăрхатпекен сывлăшпа сывлама пултарать. Калăпăр, санăн тинĕс е сăрт-ту сывлăшĕпе сывлас килет. Пус хăвăн умăнти кнопкуна, эсĕ вара, Çурçĕрте е Атăл çинче пурăннă çын юмахри пек сывлăшпа сывласа килленетĕн —дворецăн çĕр айĕнчи «сывлăш фабрики» темĕн тĕрлĕ сывлăш та туса кăларма пултарать.

Съездсем, конгрессем, аслă чаплă пухусем пулман вăхăтра президиум вырăнĕ, партер çухалаççĕ. Президиум вырăнне залăн йĕритаврари пекех амфитеатр, партер вырăнне пысăк арена пулать. Йĕритавра ларса тухнă пиншер çынсем умĕнче артистсем Бородино уйăнчи пек çапăçусене кăтартса пама пултараççĕ — вылякансен хисепĕ сцена çинче пĕр труках 2 пин те 500 çын пулма пултараççĕ. Кунта дворецăн Пысăк залĕнчех, тăван çĕршывăн сывлăхлă ывăл-хĕрĕсем пысăк пăр каток çинче конькисемпе çиçĕм пек чупса, кӳлĕ пек бассейнра чаплă ишевçĕсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартĕç. Кăшт пурăнарахпа совет çынни вуласа çеç мар, хăй те курĕ ăна, эпир халь пĕр-ик сăмахпа асăннă залра пулса савăнĕ, канĕ, экскаторсемпе, лифтсемпе çӳле улăхĕ, çӳлтен, Ленин тăнă вырăнтан, хăйĕн паха та хаклă çĕршывĕ çине шăхĕ.

Тахçан ĕлĕк, темиçе пин çул авал, Нил тинĕсе юхса тухнă тĕлте çӳллĕ Форосс маякĕ тăнă. Вăл тинĕсри çĕтсе кайнă карапсене çул кăтартнă. Ку, Мускав шывĕ хĕринчи Советсен Дворецĕ вара пĕтĕм тĕнче ĕççыннисене хăйсен чăн-чăн телейлĕ килне — коммунизм патне çитерекен çула кăтартать. Форосс маякĕн ĕмĕрĕ—темиçе çĕр çул, Советсен Дворецĕн—темиçе пин. Вăхăт çĕрĕн географине улăштарĕ: хальхи Урал сăрчĕ юханшыв пулĕ, Атăл—Урал пек сăрт пулĕ, этемлĕхе Днепрогэс та кирлĕ пулмĕ, Советсен Дворецĕ хăй вырăнче—Мускавра, Ленинăн вилĕмсĕр ĕçхĕлĕпе идейи пекех, ĕмĕр-ĕмĕр ларĕ. Мĕншĕн тесен, вăл Ленин памятникĕ, вăл Ленин ячĕпе, Ленина пула ирĕке тухнă халăх хăй телейĕшĕн тунă Дворец.

И. МОИС.

Мускав.

„Большевик“ заводри хуçалăхлă-производствăллă активăн канашлăвĕ

Çĕмĕрлери «Большевик» завод коллективĕ, Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци йышăннă решенисене пурнăçласа пырса, лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ. Завод графикĕ тăрăх ĕçлет, кашни кунах плана тултарса пырать. Май уйăхĕн 23 кунĕ хушшинче вăл уйăх планне 80 процент тултарнă. Иртнĕ уйăхра планран ирттерсе 28,2 тонна тоннида кăларнă. Май уйăхĕнче завод коллективĕ татах та ытларах тоннида туса кăларассишĕн хастарлăн кĕрешет.

Çак кунсенче заводра хуçалăхлă-производствăллă активăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура завод директорĕ И. Шустин юлташ заводăн 4 уйăхри ĕçĕсем çинчен доклад туса панă.

Паян эпир çак канашлура тухса каланă хăшпĕр юлташсен сăмахĕсене кĕскен пичетлетпĕр.

Социализмлă ăмăртăва конкретлă ертсе пыни кирлĕ

А. БЕЛЯКОВ
Партбюро секретарĕ

Социализмлă ăмăртупа стахановла движенине ялан сарса пыни çĕнĕ усĕмсем, çĕнĕ ситĕнусем тума пулăшать. Ку пыйту пирĕн тĕп вырăнта пулмалла. Ăмăртăва çиелтен мар, конкретлăн ертсе пымалла, ăна организацилемелле.

Социализмлă ăмăртăва сарса пырас тĕлĕшпе профсоюз организацисен кăна мар, хозяйственниксен, инженерно-технически работниксен те активлăн ĕçлемелле. Анчах çавна вара пирĕн заводри хăшпĕр цех, смена руководителĕсем кирлĕ пек пурнăçламаççĕ.

Уйăм цех руководителĕсем ăмăртăва ертсе пырасси профработниксен ĕçĕ тесе шутлаççĕ. Ку тĕрĕс мар! Çавăн пек шутланă пирки те ĕнтĕ хăшпĕр цехсенче (механически цех) социализмлă ăмăрту договорĕсене формально çырса тухнă, е пачах та çырман. Ăмăрту договорĕсене вăхăтра тĕрĕслемеççĕ. Малашне кун пек çитменлĕх пулмалла мар. Кашни инженерно-технически работникăнах хăй ĕçлекен участокра социализмлă ăмăртупа стахановла движенине сарса пырассишĕн конкретлă ĕçлемелле, кашни рабочине тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла.

Пирĕн заводра стахановецсем те сахал мар. Вĕсем хушшинче икшер норма тăвакансем те пур. Вĕсен паха опычĕсене ытти рабочисем хушшине сарса пымалла.

Партин XVIII конференцийĕ хыççăн завод ĕçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Халĕ эпир графика пăсмасăр, кашни кун вăтамран плана 109—113 процент тултарса пыратпăр.

Партин XVIII конференцийĕ хозяйственниксене завод экономикине тĕплĕн вĕренме хушса хаварчĕ. Эпир ăна пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçе тытăннă, экономикăллă пĕлӳ илес тĕлĕшпе вĕреннме 60 çын сырăннă. Анчах сырăннишех ĕç пулмасть-ха, вăя хурса вĕренни кирлĕ.

Пирĕн хозяйственниксен, активăн пур ĕçре те пример кăтартмалла. Массăна организацилесе унпа таччăн сыхăнса ĕçлемелле.

Оборудованисене вăхăтра юсас пулать

П. ЩУКИН
скумпи цехĕн начальникĕ

Пирĕн цех хăйне панă заданине ялан ирттерсе тултарма пултарать. Иртнĕ çулти ĕçсенчен çакна уçăнах курма пулать. Кăçал та малтанхи уйăхсенче начар мар ĕçлерĕмĕр, 1-мĕш квартал планне ытлашшипех ирттерсе тултарнă.

Анчах 1-мĕш кварталта пирĕн темиçе кун простойсем пулчĕç. Çав вăхăтра вара рабочисене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарма лекрĕ. Çавăнпа вара чĕртавара планпа пăхшинчен ытларах расходларăмăр.

Халĕ цех чĕртавар çук пирки продукци кăлараймасть. Ман шутпа, çак вăхăтпа усă курса цехра хăшпĕр оборудованисене юсамалла. Калас пулать, ремонт тумаллисем сахал мар пирĕн. Акă, «вакуум» насоса 2,5 çул хушши юсаман. Унăн чылай пайĕсем япăхса кайнă. Çакна çитес вăхăтрах юсаса лартмалла. Вăл йĕркеллĕ ĕçлемесен, пире чылай чăрмав тума пултарать.

Диффузине те ремонт тумалла. Кун пирки эпĕ механикпа калаçрăм. Анчах вăл: «ăна юсама май çук», терĕ.

Цех çине кăçал çĕнĕрен витмелле, шыв анать. Ку ĕçе те халех тума тытăнмалла.

Çурçул планне срокчен тултаратпăр

И. ШУСТИН
завод директорĕ

Даержинецсем çурçулти плана срокчен тултарма пулса ытти металлурги заводĕсене те чĕнсе калани çĕршыв тăрăх анлăн саралчĕ. Халĕ пур предприятисенче те çав чĕнĕве сӳтсе-явса, çурçул планне срокчен тултарма пулса обязательствăсем илеççĕ. Çак ăмăртăва хутшăнмасăр эпир те юлма пултараймастпăр.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта эпир çителĕксĕр ĕçлерĕмĕр, плана 86,8 процент кăна тултарнă. Партин XVIII конференцийĕ хыççăн ĕçсем лайăхланма пуçларĕç. Партипе профсоюз организацисем тата дирекци, партконференци йышăннă решенисем тăрăх хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетсе пынă май, заводра чылай улшăнусем пулса иртрĕç. Вăл çакăнтан та аван курăнать: мартăн иккĕмĕш çуруйăхĕнчен пуçласа завод графикĕ тăрăх ĕçлет, плана тултарса пырать. Апрельре плана 108,4 процент тултарнă, май уйăхĕнче те çав виçепех пыратпăр.

Пирĕн тĕп задача—çурçулти плана ăнăçлăн тултарасси. Ана пурнăçласа пулсан, плана яланах çирĕп графикĕ тăрăх тултарса пымалла, штурмовщина пачах пулмалла мар. Коллектив малалла та хальхи пекех ĕçлесен, хамăр умма лартнă задачăна эпир пурнăçлатпăр.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче Маленков юлташ продукцин хăйне ларакан хакне яланах чакарса пырасси çинчен уйăмăнах хыттăн паллă турĕ. Çавăнпа ку пыйту пирĕнтĕн те чи кирлĕ вырăнта тăмалла. 4 уйăхри тĕслĕхсене илсе пăхсан, вĕсем начарах мар: продукцин хăйне ларакан хакне 4,1 процент чакарнă. Ку вăл пуринчен ытла чĕртавара перекетленинчен, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынинчен килнĕ.

Анчах цехри расходсем пысăк. Ку енĕпе планпа палăртнинчен ытларах расходланă. Малашне çак çитменлĕхе пĕтермелле. Кăçалхи çурçулта пирĕн продукцин хăйне ларакан хакне 4 процентран кая мар чакармалла.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырасси те кирлĕ пулать. 4 уйăх хушшинче ĕç тухăçлăхне 1,7 процент ӳстернĕ. Унăн хисепĕ татах та пысăкрах пулмаллаччĕ, январьпе февраль уйăхĕсенче япăх ĕçленĕ, март тата апрель уйăхĕсенче кăна ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пыни курăнать. Пирĕн çурçулта ĕç тухăçлăхне 2 процентран кая мар хăпартмалла.

Производство планне йĕркеллĕн тултарса пырасси технологи режимне лайăх пăхăнса пынинчен килет. Диффузине, станоксемпе аггрегатсене тĕрĕс ĕçлеттермелле. Апрель уйăхĕнче йĕркеллĕ ĕçленĕ май, 39 пин тенкĕлĕх ытла чĕртавар перекетлерĕмĕр. Малашне кашни тонна тоннида тума каякан вутăран пĕр кубометрпе перекетлемелле.

Пĕтĕм ĕçе социализмлă ăмăртупа стахановла движенине анлăн сарса пынипе туса пымалла. Паянхи куна заводра сдельщинăпа ĕçлекенсенчен 61 проценчĕ стахановецсем тата 25 процента яхăн ударниксем шутланаççĕ. Рубильщик Н. Сиксимов юлташ сменăра 25 тонна вутă вакластырăнне 34 тонна, Виноградов—35—37 тонна вакласçĕ, возчик Кириллов юлташ кунне 11 тонна турттарас вырăнне 15 тонна турттарать. Дерябин, Моторин слесарьсем нормăна 200 процент, Баранов 220 процент тултараççĕ.

Стахановла движенине сарса пырас тĕлĕшпе профорганизацин кăна мар, цех начальникĕсен, смена мастерĕсен, инженерно-технически работниксен ытларах ĕçлемелле.

Нормăна тултарса пырайман рабочисене пулăшас майпа стахановла шкулсем организацилерĕмĕр, паянхи куна вĕсем 4 пур тата тепĕр çавăн чухлĕ организацилеме пăхатпăр. Çак шкулсенче пур рабочисене те стахановла ĕçлеме вĕрентмелле, юлса пыракан рабочисене стахановецсен ĕç меслечĕсемпе паллаштармалла. Пирĕн заводра нормăна тултарайман пĕр рабочи те, пĕр работница та ан пултăр. Пĕтĕм коллективăн стахановла ĕçлемелле.

Стахановецсен опычĕсемпе паллаштараççĕ

Юлса пыракан рабочисене производствăра малта пыракансен опычĕсемпе паллаштарни ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма пулăшать. Çапла тунипе ĕнтĕ пирĕн хăшпĕр коллективсем стахановла ĕçлеççĕ.

Стахановецсен паха опычĕсене ытти рабочисем хушшинче сарса пымалли чи паха майсенчен пĕри вăл — стахановла шкулсем. Куна эпир хамăр ĕçри опытсенчен те лайăх куратпăр. Юлашки çулсенче пирĕн комбинатра стахановла шкулсенчен чылай рабочисем вĕренсе тухнă. Халĕ вара вĕсем пурте производствăра стахановла тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Стахановла шкулсем пысăк усă паннине кура кăçал комбинатра 11 шкул организациленĕччĕ. Паянхи куна 10 шкулĕнчен 94 рабочи вĕренсе тухнă та ĕнтĕ. Пĕрремĕш номерлĕ цехра пĕтĕмпе 3 шкул организациленĕ пулнă. Вĕсене чи лайăх стахановецсем ертсе пычĕç. Халĕ шкултан вĕренсе тухнисенчен нормăна тултарса пырайманнисем çук, чылайăшĕсем стахановецсем. Екатерина Шуренкова юлташ юлашки вăхăтра нормăна икĕ хут ирттерсе тултарать, Татьяна Варлыгина юлташ 150—175 процент, Александра Федорова юлташ 175 процент тултараççĕ.

Иккĕмĕш номерлĕ цехри станочницастахановка Аючатова юлташ иртнĕ çулта стахановла шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн вăл ялан хăйĕн нормине ирттерсе тултарма пуçланă. Хастарлă работница кăçал хăй стахановла шкулта вĕрентме пуçларĕ. Халĕ вăл вĕрентнĕ рабочисем ĕç нормисене ытлашшипех тултараççĕ.

Стахановла шкулсенче чăн малтанхи занятисенчех руководительсем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен каласа ăнлантараççĕ, ун хыççăн малаллахи занятисем станок, аггрегат патĕнче пулса иртеççĕ.

Май уйăхĕн малтанхи кунĕсенче эпир тата 4 шкул организацилерĕмĕр, вĕсенче 29 çын вĕренет. Калас пулать, шкулта вĕренекенсем малтанхи занятисем хыççăнах производствăра лайăхрах ĕçлени курăнать. Рабочисем шкулта вĕренни мĕнле пысăк усă паннине уçăнах туйса илчĕç ĕнтĕ, вĕсем занятисене йĕркеллĕ çӳреççĕ.

К. ДМИТРИЕВ.

Древкомбинатри кадрсен пайĕн начальникĕ.

Технологи дисциплинине çирĕплĕн пăхăнмалла

И. ЛАНИН
главнăй инженер

Завод юлашки икĕ уйăх хушшинче лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Апрель уйăхĕнче эпир планран ирттерсе чылай тоннида туса кăларма пултартăмăр. Май уйăхĕнче продукци туса кăларасси татах та ӳсрĕ. Плана ку уйăхра та, пĕр иккĕленмесĕрех каламалла, пирĕн коллектив ытлашшипех тултарма пултарать.

Калас пулать, XVIII партконференци хыççăн чылай енĕпе ĕçсем лайăхланчĕç. Вăл пуринчĕн те паллă ĕнтĕ. Анчах çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Вĕсем çинчен пирĕн уйрăмăнах ытларах калаçмалла.

Кĕскен—технологи дисциплини çинчен. Ку енĕпе илсен паянхи кунченех ăна тĕрĕссĕн пурнăçласа пымаççĕ. Турпассене вакласси пысăк тата кăткăс ĕç те мар ĕнтĕ, çапах та ăна кирлĕ пек вакламаççĕ. Хăшпĕр сменăра ытлашши вĕтĕ тăваççĕ, теприсем — вăсерен ирттерсе пысăкрах вакласçĕ.

Температура режимне пĕрмаях сăнаса тăмаççĕ. Уйрăм сменăсенче 100—105 градус ĕç тытаççĕ. Пуриншĕн те паллă, производствăра температура 105 градусран кая мар пулмалла. Çак режима пурин те тĕплĕн сăнаса пымалла.

Оборудованисемпе те туллин усă курмастпăр. Хăшпĕр агрегатсем япăха пуçланă, вĕсене юсамалла. Ку ĕçе тума пирĕн хамăрăннах условисем çителĕклĕ, материалсем те пур.

Вăрман хатĕрлесси хакла ларать

В. КИТАЕВ
главнăй бухгалтерăн заместителĕ

Иртнĕ çулсенче пирĕн вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенни — заготовительнăй контора пулнă. Завод хăйне кирлĕ вутăна унтан илсе тăнă.

Заготконторăна пĕтерсе унăн ĕçне завода панă хыççăн ĕç урăхланчĕ. Халĕ эпир вутă хатĕрлени мĕн хака ларнине шутланă чух касса вакланинчен пуçласа ăна склада турттарса пыратченех учета илетпĕр. Пĕр сăмахпа каласан, вăрман касса, ăна турттарса пыни пĕтĕмпех завод калăракан продукцин хăйне ларакан хакне шутланă çĕре каять. Апла пулсан, вăрман касса турттарнă çĕрте тухăçлăн ĕçлени кирлĕ.

Мĕн курăнать-ха халĕ? Автотранспорт хăйĕн ĕçне тивĕçлĕн туса пыраймасть. Виçĕ уйăх хушшинче вăл хăйĕн заданине 35 процент кăна тултарнă. Мĕн тăвать вăл? Автотранспорт уйрăмĕнче ĕçлекенсем ку пыйтăва хирĕç «ĕçлетпĕр», «ремонт тăватпăр», теме пăхаççĕ. Кунта ĕçе тĕрĕс организацилемен. Ĕç вăйĕ чылай, анчах вĕсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк мар. Çаксем ĕнтĕ, паллах, продукцин хăйне ларакан хакне чакарса пыма мар, ӳстерсе пыма пултараççĕ.

Кăçал шыв тăрăх нумай йывăç килмелле. Шыв хĕррипе вăхăтра турттарас тесен, çителĕклĕ ĕç вăйĕ хатĕрлени кирлĕ. Паянхи куна ку тĕлĕшпе ĕçсем начар-ха, йывăççем патĕнче пĕр работник кăна пур, вăл пур ĕçе те туса пыма пултараймасть.

Йывăççене вăхăтра турттарманни, простой туни ытлашши расход тутарать. Апла пулсан çакă та экстракт хакне хăпартать. Завод дирекцийĕн çак çитменлĕхе пĕтермелле.

Канашпа Патăрьел хушшинчи çула тӳрлетнĕ çĕрте.
Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Етĕрне — Çĕмĕрле çулĕн строительстви

Çак кунсенче ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе райсовет исполкомĕ Етĕрне—Çĕмĕрле çулĕн строительствине вĕçлесси çинчен пăхса тухнă, ку тĕлĕппе конкретлă мероприятисем туса ирттерме палăртнă.

Çул строительствинче суту-илӳ ĕçне лайăх туса пымалла, ăна валли пĕр вырăнта тăтăшах ĕçлекен тата кусса çӳрекен ларексем, лавкасем уçмалла. Тракт çинче ĕçлекенсем валли вĕри апат тата вĕретнĕ шыв çителĕклĕ тăратма вăхăтлăх столовăйсем, шыв вĕретекен пунктсем организацилемелле. Колхоз правленийĕсене кусса çӳрекен кухнясемпе кипятильниксем тума хушнă.

Райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн тата РОКК райсовечĕн медицина работникĕсене уйрăм участоксем çирĕплетсе параççĕ. Çул çинче кусса çӳрекен палаткăсем, медицина пукăчĕсем, парикмахерскисем пуласçĕ. Райçĕрĕç пайĕ лашасене ветеринари енĕпе пулăшу парассине организацилет.

Тракт çинчи чылай участоксене радификацилеççĕ. Радио тăрăх тата хаçатсем урлă çулĕр строительстăн мĕнле пыни çинчен тăтăшах çутатса тăмалла.

Уйрăм колхозсенче урапасем çителĕклĕ мар. Çакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Ждановăн ячĕпе тăракан промартеле — 150, лесхоз утильцехне — 150, мехлесопункта 100 урапа тума хушнă.

Ĕç пĕр вырăнтан тапранмасть

ЭЛЕК. (**Хамăр корр.**). Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ çирĕплетнĕ график тăрăх, Етĕрне—Çĕмĕрле çулĕн строительствинче районран куллен 600 çын хутшăнса ĕçлемелле. Халĕ ку ĕç кунта вырăнтан тапранманпа пĕрех.

План тăрăх çĕр ĕçне июнĕн 20-мĕшне пĕтермелле. Анчах кунта çулĕр строительствин ĕçне куллен вăйлатса пырассишĕн кĕрешмеççĕ. Ун вырăнне районран вырăнсене «решенисем» янипе лăпланса параççĕ.

Çулĕр строительствине хатĕр мар

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ĕмĕрт ялсоветĕ кăçалхи çулĕр строительствин сезонне япăх хатĕрленчĕ. Кунти колхозсенчен нихăш те строительство материалĕсем хатĕрлесе çитермен. Хăшпĕр колхозсем — Чăваш Туçари тата Хутор Шĕнерти колхозсем çулĕр бригадисене те уйăрса çирĕплетмен.

Чăваш Туçаран Ĕмĕрте каякан çул çинче çырма урлă каçса каймалли кĕпер тахçанах ишĕлсе аннă. Кĕпере юсама материалсем пур, анчах ăна хăвăртрах юсама васкамаççĕ.

Ф. НИКОЛАЕВ.

Виççĕмĕш пятилеткăри стройкăсем

Хусан—Бугульма чугунçулĕ

Сталинла виççĕмĕш пятилеткăра туса çитермелли стройкăсен шутĕнче Хусанпа Бугульма хушшинчи чугунçул строительстви палăртнă. Ăна валли пĕр вырăнта тăтăшах ĕçлекен тата кусса çӳрекен ларексем, лавкасем уçмалла. Тракт çинче ĕçлекенсем валли вĕри апат тата вĕретнĕ шыв çителĕклĕ тăратма вăхăтлăх столовăйсем, шыв вĕретекен пунктсем организацилемелле. Колхоз правленийĕсене кусса çӳрекен кухнясемпе кипятильниксем тума хушнă.

Райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн тата РОКК райсовечĕн медицина работникĕсене уйрăм участоксем çирĕплетсе параççĕ. Çул çинче кусса çӳрекен палаткăсем, медицина пукăчĕсем, парикмахерскисем пуласçĕ. Райçĕрĕç пайĕ лашасене ветеринари енĕпе пулăшу парассине организацилет.

Тракт çинчи чылай участоксене радификацилеççĕ. Радио тăрăх тата хаçатсем урлă çулĕр строительстăн мĕнле пыни çинчен тăтăшах çутатса тăмалла.

Уйрăм колхозсенче урапасем çителĕклĕ мар. Çакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Ждановăн ячĕпе тăракан промартеле — 150, лесхоз утильцехне — 150, мехлесопункта 100 урапа тума хушнă.

Çак лини вăл Тутар республикишĕн анчах мар, пĕтĕм Совет Союзĕшĕн те пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Ăкмолинск—Карталы—Магнитогорск хушшинчи чугунçул магистралĕне пĕрлешсе, вăл лини Кăнтăр Уралран тата Çурçĕр Казахстанран килекен транзитлă грузсен çулне чылай кĕскетет.

Хусан—Бугульма чугунçулне тума (Кама шывĕ çинчи кĕпĕрсĕр пуçне) 246 миллион та 325 пин тенкĕ расходламалла. Чугунçул валли Кама шывĕ урлă хывмалли кĕпер—Совет Союзĕнчи тата Европăри ни пысăк кĕпĕрсенчен пĕри пулмалла (унăн тăршшĕ—1.200 метр, кĕпер çине кĕмелли икĕ ĕнчи вырăнĕсем пĕтĕмпе 8.000 метр). Çак магистраль çинче 14 станци тата 17 разъезд пулать.

Орденлă Тутар республикинчи ĕçсыннисем çак пысăк строительствăпа ытларах та ытларах интереслемне тытăнчĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ малта пыракан колхозсем вăл стройкăна тӳррĕнех хутшăнаççĕ, чи лайăх колхозниксене лини çинче ĕçлеме яраççĕ.

Хусан—Бугульма чугунçулне туса çитерессине хăвăртлатас тĕлĕшпе колхозниксем пани сĕнӳсемпе килĕшсе, ВКП(б) Тутар Обкомĕ июнь уйăхĕнче трасса çинче ĕçлеме колхозниксене массăллăн калăрассине организацилеме йышăнчĕ.

Çапла вара июнь уйăхĕнче çĕнĕ чугунçул сывăхĕнчи 23 районран трасса çинче 17 пин çын, вăл шутран 7.400 çын лашасемпе ĕçлемелле. Районсенче халĕ строительство ĕçне тухма активлăн хатĕрленеççĕ. Кашни колхозрах бригадăсем организацилеççĕ, кирлĕ таран транспорт тата инвентарьсем хатĕрлеççĕ. «Хусан—Бугульма чугунçулне пĕтĕм Тутар республики тăвать» тенĕ лозунга пурнăçлассишĕн хĕрӳ ĕç пуçланать.

Хусан. **А. ФЕДОРОВ.**

Пĕренесене юхтарса пĕтернĕ

Пĕренесене çурхи шывпа çулă тумасăр юхтарас ĕçе республикăра пĕтĕмпех вĕçленĕ. Пĕлтĕр çурхи шывпа 100 пин кубометр юхтарнă пулсан, кăçал 210 пин кубометр юхтарнă.

Ку тĕлĕшпе Шăмăршă вăрманпромхозĕ (директорĕ Смирнов юлташ), Пĕрес вăрманпромхозĕ (директорĕ Федоров юлташ) тата Алтышевăри вăрман завочĕ (директорĕ Наумов юлташ) лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Çуркунне пĕренесем юхтармалли плана вĕсем срокченех тултарнă.

Шăмăршă вăрманпромхозĕ Упамса шывĕпе пĕренесене 6 кун, Хура Пасна шывĕпе 7 кун юхтарас вырăнне, виçĕ кун хушшинче, Шурă Пасна шывĕпе юхтармалли пĕренесене те срокчен юхтарса пĕтернĕ. Ытти вăрманпромхозсенче те çавăн пек çитĕнӳсем туна.

Уйрăм бригадăсенчен Шăмăршă вăрманпромхозĕнчи Алимов юлташ бригади пĕтĕ те пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ. Ку бригада ĕç нормине 640 процент тултарса пынă.

Алтышево вăрман заводĕнчи бригадăсенчен Рузанин тата Малышкин юлташсен бригадисене палăртмалла. Çак бригадăри членсем хăйсен ĕç нормисене 170 пин процент тултарса пынă.

Пĕренесем юхтарас ĕçре хăшпĕр колхозсем те пысăк пулăшу пачĕç, вĕсем хăйсен договорĕсене ирттерсе тултарнă. Пĕрес районĕнчи «Победа», «Освавнахим», «Пролетарий» колхозсем договорсене 200 — 278 процент, Шăмăршă районĕнчи «Юлташ» тата Улатăр районĕнчи «Юность» колхозсем 150—160 процент таран тултарнă.

И. Е.

БИБЛИОГРАФИ

„Чăваш фольклорĕ“(*)

Чăваш АССР Государство издательствипе чăвашсен чĕлхе, литература тата историн наукăпа тĕпчев институчĕ çак кĕнекене кăларнине пысăк та пархатарлă ĕç тунă. Анчах, тӳрех калас пулать, çак пысăк ĕçре пысăк çитменлĕхсем тĕл пулаççĕ. Эпир çав хăшпĕр çитменлĕхсене кĕскен те пулин кăтартса парастăн.

Кĕнекере ушкĕнпе 215 страница. Çак шутран 24 страницине «Октябрь хыççăнхи фольклор» тенĕ уйрăм йышăнать. Пире çакă тĕлĕнтерет: мĕнле сăлтавпа-ши çак уйрăма мĕнпурĕ те 24 страница çеç пана? Ирĕкĕрех ĕнтĕ пуçа çакăн пек шухăш килет: кĕнекене хатĕрлекенсем «чăвашсем Октябрь саманинче 24-мĕш çул çеç пурăнаççĕ, çавăнпа çак кĕске вăхăтра вĕсен фольклорĕ нумаях пухăнман», тесе шухăшланă пулмалла. Урăхла ăнланма ниепле те май та çук.

Манас пулмасть, Октябрь хыççăн чăваш халăхĕ те, ытти халăхсем пекех, савăнăçлă та телейлĕ пурнăçпа пурăнма пуçларĕ. Этем тени, пуçне те паллă ĕнтĕ, савăнăçлă вăхăтра ытларах, хитререх, юрлать, сасси те унăн усăрах тухать, ташшисем те, вăйăсем те илемлĕрех, çеплĕçрех пулаççĕ. Савăнпа та ĕнтĕ кĕнекере Октябрь хыççăнхи фольклор валли 24 страница çеç уйăрнине эпир кĕнекене хатĕрленĕ тата редакциленĕ юлташсен пысăк çитменлĕхĕ тесе шутлатпăр. Ку уйрăма мĕнпурĕ 3 юмах (вĕсенчен те пĕрине вырăсларан куçарнă), граждан вăрçи такмакĕсем 2, колхоз юррисем 9, колхоз такмакĕсем 1, заем такмакĕсем 1, Хĕрлĕ çар ыйтăвĕпе 1 юрă, Ленинпа Сталин çинчен хунă юрăсемпе такмаксем 8 тата ваттисен сăмаххисем кĕнĕ. Ăçта-ши пирĕн телейлĕ çамрăклăх, комсомол? Е вĕсен юррисем çук?

«Ăсату юрри» пирки пĕр-ик сăмах. Ку юрăра виçĕ куплет. Ун айне «К. Маклашкин, Сĕнтĕрвăрри районĕ, А. Тогаев çырса илнĕ», тесе паллă туна.

«Улма йывăç авăнать
Улми нумай **пулнăран** (пулнăран пуль ĕнтĕ!).
Çамрăк чунăм савăнать
Савни çара кайнăран т. ыт. те.

Çак юррах пире час-часах чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ И. Ивник çырнă сăвă тесе юрласа парать. Кама ĕненмелле ĕнтĕ?

Кĕнекере вульгарлă сăмахсем те сахал мар тĕл пулаççĕ: «Инке, терĕм, мĕн терĕм, ăш мунчана пыр, терĕм» (32 стр), «Мĕн аннӳ кӳчĕ Энтюкĕ» (87 стр) т. ыт. те. «Кантăр ани пуçĕнче» юрă та çак шутах кĕрет. Кама мĕн усă параççĕ ши вĕсем? Паллах, хулиганла юрăсене халăх юррисен ретне кĕртни—тивĕçсĕр ĕç.

Пурте пĕлетпĕр, чăвашсен авалхи тĕп ĕçĕ—çĕр ĕçлесси, ака суха пулнă. Пайтах капăр кĕвĕсем хывнă пирĕн халăх ака-суха çинчен. Апла пулин те, сборнике хатĕрлекенсем ака суха юррисене «Ĕç юррисем» ятлă уйрăма кăларнă. Çапла вара ĕç юррисем çинчен ăнлантарнă пек, ăна ĕçе тытăнакан, ĕçе пуçлакан, ĕçе вĕçленĕ чухне юрланă юрăсем кĕнĕ. Ăна ĕçе тытăнакан, ĕçе пуçлакан юрăсем çинчен ăнлантарнă пек, ăна ĕçе вĕçленĕ чухне юрланă

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра чи пысăк событи Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнчи тинĕсри çапăçу пулнă. Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин «Бисмарк» ятлă линкорне—Англин «Худ» ятлă линейнăй крейсерне путарнă тата Англин «Кинг Джордж У» линкорне сиен кӳнĕ линкора майăн 17-мĕшĕнче ирхине Англи тинĕс-çар вăйĕсем путарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин «Бисмарк» линкорне тата 8 дюймла орудисемпе хĕçпăшалланнă «Принц Евгений» ятлă крейсерне майăн 22-мĕшĕнче, вĕсем Бергенран тухнă вăхăтра тĕл пулнă. Англи тинĕс министерстви çав карапсене çавăрса илме приказ панă. Майăн 24-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ вăхăтра Англин «Принц Уэльский» ятлă линкорĕпе «Худ» ятлă линейнăй крейсерĕ Германи карапĕсене хирĕç çапăçма пуçланă. 2—3 пин ярдран персе янă снаряд «Худ» карапăн артиллери нӳхрепĕ çине пырса ӳкнĕ, снаряд çурăлнипе крейсер арканса кайнă. Çанталăк тĕтреллĕ пулнипе усă курса, «Бисмарк» Англи карапĕсенчен тарса пытаннă. Майăн 26-мĕшĕнче «Арк-Ройял» авианосец çинчи самолетсем ăна каллех шыраса тупнă, çак вăхăтра вăл Франципи портсенчен пĕрин патнелле çул тытса пынă пулнă. «Арк-Ройял» çинчен вĕссе çĕкленнĕ торпедоносец-бомбардировщиксене çийĕнчех ун патнелле янă, çакăн хыççăн çурçĕр тĕлĕнче «Бисмарк» çине икĕ торпеда пăрахнă. Унтан Англи карапĕсем пырса çитнĕ те «Бисмарка» путарнă.

Германи командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, майăн 26-мĕшĕнче кăнтăрла тата ыран майăн 27-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Англин кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕ çинчи портсен сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Вăтăçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче ытларах активлă вăрçă ĕçĕсем Крит утравĕ çинче сарăлса пыраççĕ. Германи войскисем, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, çĕнĕрен темиçе пункт тӳртса илнĕ тата малалла кайса пыраççĕ. Малеми районĕнче, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, хаяр çапăсусем пыраççĕ. Каниле Малеми хушшинчи аэродром патĕнче çав-çавах çапăçу пырать. Рейтер агентстви тепĕр пĕлтерӳре калани тăрăх, нимĕçсем тинĕс çинчен десант антарса хăварма хăтланнисем ăнăçсăр пулнă. Англи енчен Крит çине халĕ те çĕнĕ войскăсем пыраççĕ.

Çапăçусене вăрçă вăрçакан енсен авиацийĕ активлăн хутшăнать. Германи командованийĕн сводкинче калани тăрăх, Крит утравĕ çинче Германи самолечĕсем англичансен пĕр çĕре пухăнă войскисем çине, уйăри лагерьсемпе опорлă пунктсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем, тенĕ Англи командованийĕн сводкинче, нимĕçсен позицийĕсем çине пыра-пыра тапăннă. Пуринчен ытларах Малемири аэродром çине тата ун çумĕнчи районсем çине бомбăсем пăрахнă, мĕншĕн тесен унта Германин транспорт самолечĕсемпе планерăсем анса ларнă. Нимĕçсен нумай самолетне пĕтерсе тăкнă.

Крит утравĕ патĕнчи тинĕсри çапăçусенче, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англин 4 эсминецĕпе икĕ крейсерне путарнă; Англин икĕ линкорне, темиçе крейсерĕпе эсминецне пысăк мар сиен кӳнĕ. Германи командованийĕн сводкинче çапла калана: Вăтăçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче Германин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем Англи флочĕн пысăк соединенийĕ çине пырса тапăннă, пĕр авианосецпа икĕ крейсера сиен кӳнĕ.

Сурçĕр Африкăра, Соллум патĕнче, тенĕ Германи сводкинче, Германи çăçĕсем англичансен пысăк мар атакине сирсе янă. Англи командованийĕн сводкинче çапла кăтартса панă: Соллум районĕнче патрульсемпе артиллерин активлă ĕçĕсем палăраççĕ. Авиаци те чылаях активлăн кĕрешет. Германипе Итали самолечĕсем, тенĕ Германипе Итали сводкисенче, Тобрук укрепленийĕсемпе англичансен пĕр çĕре пухăнă войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи авиацийĕ Бенгази çине пырса тапăннă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, итальянецсен хăшпĕр çăçĕсем Англи войскисене хирĕç çапăçма пăрахманха. Баро юханшывĕ çинче (Галла-Сидамо облаçĕнче), тенĕ Итали командованийĕн сводкинче, Итали войскисем англичансен отрядне пĕтерсе тăкнă. Дебра-Табор районĕнче (Тана кӳлли патĕнчен хĕвелтухăç енче) Итали çăçĕсем англичансене хирĕç кĕрешеççĕ.

Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ къларнă коммюникере калани тăрăх, Омо юханшывĕн сывăхĕнче Англи авиацийĕ итальянецсен позицийĕсемпе автотранспорчĕ çине татах тепĕр хут пырса тапăннă.

Италин Абиссинири войскисен положенийĕ пирки Рейтер агентстви çапла кăтартса парать: Джиммара (Аддис-Абеба патĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăç енче) пухăнса тăнă итальянецсен вăйĕсем умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă пулмалла. Çакăнта итальянецсем англичансене хирĕç нумай вăхăт хушши кĕрешме пултарĕç тесе шутлама çук. Темиçе эрне каярах вĕсен войскисенче 30—40 пин çын шутланнă пулсан, вĕсен пĕрмаях сахалланса пыраççĕ, мĕншĕн тесен войскăсен пĕр пайĕ тарса пĕтнĕ е тыткăна лекнĕ.

* * *

Ираира, Ирак командованийĕн сводкинче калани тăрăх, Басра районĕнче тата Рамадипе Рутба хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Басра районĕнчи çапăçусенче, тенĕ малалла сводкăра, англичансен вилнисемпе аманнисем 150 çын шутланаççĕ. Рамадипе Рутба хушшинчи секторта Ирак çăçĕсем англичансенчен броне-автомобильсемпе пулеметсем туртса илнĕ.

Англи самолечĕсем Рамадири çар сооруженийĕсем çине, Мосулри аэродром çине тата Германин Бакуб аэродромĕнче пулнă самолечĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Кунсăр пуçне, Сирин Тадморти (Пальмира) аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ирак авиацийĕ Хаббани çине бомбăсем пырса пăрахнă, бомбăсем тивнипе Англи радиостанцийĕ ĕçлеме чарăннă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ, Анкарари çар çыннисем калани тăрăх, çапла пĕлтерет: Ираклăн сывлăшри вăйĕсене чăннипе илсен пĕтерсе тăкнă. Англи самолечĕсемпе, çавăн пекех Америка самолечĕсемпе усă курса, англичансем сывлăшра пуçпулса тăма тытăнă пулас.

Майăн 27-мĕш. (ТАСС).

Германин „Бисмарк“ ятлă линкорне путарнă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Гренландипе Исланди хушшинчи Датски проливра Германин «Бисмарк» ятлă линкорĕ тата унпа пĕрле çӳрекен карапсем Англи карапĕсен хăйсенчен пысăкрах группине хирĕç çапăçаççĕ.

БЕРЛИН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Бисмарк» линкорăн малти пайĕ çине торпеда пырса лекнипе унăн хăвăртлăхĕ чакнă. Майăн 24-мĕшĕнче самолет çинчен пăрахнă торпеда пырса тивнипе «Бисмарк» татах та хулленрех инме пуçланă. Майăн 26-мĕшĕнче 21 сехет тĕлнелле, Брест патĕнчен хĕвеланăç еннелле 400 миляра, самолетсем çинчен пăрахнă икĕ торпеда, карапа çĕнĕ сиенсем кӳнĕ, пĕр торпеда тивнипе руль тата винтсем стройран тухнă. 23 сехет те 42 минутăра линкор çинчи адмирал Лютьенс Германин тинĕс вăйĕсен верховнăй командованине карап управленийĕ çухални çинчен пĕлтернĕ. Майăн 27-мĕшĕнче ирхине линкора путарнă.

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: «Пирĕн тинĕс-çар вăйĕсем Германин «Бисмарк» ятлă линкорне путарнă».

Гросс-адмирал Редер Домей Цусин агентстви корреспондентне пана интервью

БЕРЛИН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, гросс-адмирал Редер Домей Цусин агентстви Берлинри корреспондентне интервью пана. Çав интервьюра Редер паянхи кун пысăк выран йышăнса тăракан чылай ыйтусем пирки калана. Корреспондент: вăрçă ĕçĕсем пыракан тĕрлĕ вырăнсене хĕçпăшал туртарса пырас тĕлĕшпе США Англине пулăшу панинчен тухса тăма пултаракан ĕçсем çине Германин тинĕс-çар флочĕ мĕйле пăхать тесе ыйтсан, Редер çакăн пек ответ панă: Германин тинĕс-çар флочĕ çак ĕçе питех те пысăк вырăна хурать.

Малалла корреспондент Англин çар транспорчĕсене Америка çар карапĕсем е Америка авиацийĕ сыхласа çӳрекен вонăсене сарасси çинчен, çавăн пекех тата США-ра пурнăçа кĕртме сĕпекен конвой системи çинчен ыйту панă.

Çӳлте асăннă мероприятисем çинчен, тенĕ Редер, çак ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан çынсем çавтери татăклăн калана, çавăнпа та ăна шута илес пулать: конвоя илес пулсан, тенĕ Редер, «эпĕ президент Рузвельтăн çак шухăшне çирĕплетсе калама кăна пултаратăп: конвой вăл—хĕçпăшалсенчен пересснне пĕлтерет». Çапла ĕнтĕ конвоирови системи çине кӳçасси, тенĕ Редер, вăрçă ĕçĕсем пуçлассине пĕлтерет, çавăнпа та Германин тинĕсри вăйĕсем, кирлĕ чухне, Америкăн хирĕç тăракан карапĕсене хирĕç хĕçпăшалсенчен персе ответ пама пултараççĕ.

Юлашкинчен Редер нейтральнăй çĕршывсен çутăсене сӳнтерсе ишсе çӳрекен, суту-илӳ тумалли суднисемшĕн харушлăх пулма пултарасси çинчен асăрхаттарнă.

Колле полковника Франци гражданствинчен кăларнă

ЛИОН, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Колле полковника Франци гражданствинчен кăларнă, мĕншĕн тесен вăл Англи войскисемпе пĕрлешме Транскордаиине кусса кайнă тата хăйĕн командованийĕнче тăракан чăссене хăйпе пĕрле илсе кайма хăтланнă.

КĔСКЕН

Австралин суту-илӳ министрĕ Пэйдж çапла калана: Англи валли продовольстви тăратас ыйту çине хальхи вăхăтра чи пысăк тимлĕхпе пăхмалла. Çак ыйтура Австралия Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе пĕрле сыхăнса ĕçлени, тенĕ Пэйдж, Англине кирлĕ чухлĕ продовольстви тăратма май парать



Атăл çинче.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Иван Франко сочиненийĕсен юбилейлă изданийĕ

Иван Франко вилнĕренпе 25 çул тултарнине паллă тăвас шутпа Гослитиздат Украинăри аслă поэт çырнă сочиненисем юбилейлă изданине пичетлесе кăларма тытăннă. Халхи вăхăтра пирвайхи икĕ тома производствăна панă.

Пĕрремĕш тома Франко çырнă лирикăллă произведенисемпе пысăк поэмăсем — «Мойсей», «Иван Вишенский», «Похороны» поэмăсем кĕреççĕ. Çак произведенисене вырăсла куçарас тĕлĕшпе совет поэчĕсем тата переводчиксем 50 çын ытла — А. Твардовский, В. Гусев, А. Сурков, Н. Ушаков, М. Исаковский, Б. Пастернак, В. Инбер, И. Сельвинский, В. Державин т. ытти юлташсем ĕçленĕ.

Иккĕмĕш тома прозăллă произведенисем — Галицири рабочисемпе хресченсен пурнăçне кăтартса паракан калавсемпе повеççем кĕреççĕ. Çак 35 листаллă кĕнекере калавсен «В поте лица» ятлă циклĕ тата «Борислав смеется», «Боа конструктор», «Борославские рассказы» произведенисем кĕреççĕ. Произведенисенчен нумайĕшне ятарласах çак издани валли çĕнĕрен куçарнă. Хăшпĕр калавсене ĕлĕкех Леся Украинка тата белоруссен паллă поэчĕ М. Богданович куçарнă, вĕсене çаплипех пичетлесе кăларaççĕ.

Малаллахи томсене халиччен вырăсла куçарман чылай произведенисем, вăл шутра «Столпы общества» повесть, кĕреççĕ. Франко çырнă литературăллă-критикăллă чылай статьясене, уйрăмăн илсен вăл Украина литературин çинчен, Л. Толстой çинчен тата Э. Золя çинчен çырнă статьясем пичетленсе тухаççĕ.

Çак издани валли Сталинла преми лауреачĕ академик А. Е. Корнейчук уместатья çырнă. (ТАСС).

„Философи историйĕн“ иккĕмĕш томĕ

Сывăх вăхăтсенче Госполитиздат «Философи историйĕн» иккĕмĕш томне пичетлесе кăларать. Çак том XV-мĕш-пе XVIII-мĕш ĕмĕрсем хушшинчи философи çинчен каласа парать.

СССР Наукăсен Академийĕн философи институчĕ пичете пама хатĕрлекен пĕтĕм изданире пурĕ çичĕ том пулмалла. Вăл питех те пысăк тапхăра — античнăй рабовладельчески общество философийĕнчен пуçласа марксизм философине Ленин тата Сталин малалла аталантарса янă таран кăтартса парать.

Район центрĕсенчи благоустройство ĕçĕ

Львов облаçĕнчи район центрĕсенче благоустройство ĕçĕ пысăккăн сарăлса пырать.

Брод хулинче шыв пăркин магистральне реконструкцилеççĕ. Çав хулара пысăк парк тăваççĕ. Пурăнмалли 40 çурта, тротуарсене юсаççĕ, прачечнăй тата тумтирсем юсакан мастерскойе т. ыт. те уçаççĕ.

Тăвата район центрĕнче отель строительстви вĕçленсе пырать. Рава-Русскара хула мунчине туса пĕтереççĕ.

Кăçал области районсен коммуналлă нушисене витме 3.500 пин тенке яхăн расходлама пăхнă.

Государство кредитне пулăшакан комиссисен отчечĕсем

Ленинград хулинче государство кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиссисем 4.200 ытла шутланаççĕ. Комсодсем халь фабрик-завод комитечĕсен пленумĕсенче тата месткомсенче çулталăк хушшинчи ĕçĕсем çинчен отчетсем тăваççĕ.

Ленински районри артельсенче, шкулсенче, домоуправлинисенче ĕçлекен 170 комсодсен тата 400 уполномоченнăйăн ĕçĕсене тĕрĕслесе тухнă.

Киров ячĕпе тăракан заводра заем тытăнăвĕсем хушшинче ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Цехсенче заем вылявĕсен таблицисене çăкмалли витринăсем тунă. Кашни тираж пулса иртнĕ хыççăнах комсодсен активисчĕсем рабочисемпе служащисен аллинчи облигацисене тĕрĕслесе тăраççĕ.

Кӳкĕрт руди выртнине тупнă

Центральнăй Кара-Кумри тĕмескесенчен пĕринче кӳкĕрт руди нумай выртнине тупнă. Анчах çав рудана çĕр айĕнчен кăларма чылай йывăр пулнă, вăл 12 метр тарăнăш аялта выртать. Рудана çĕр айĕнчен кăларма 200 рабочие яхăн кирлĕ пулать. Çавăнпа та, çав тĕмескене взрыв туса салатма йышăннă.

ИВ. СЕРГЕЕВ.

Çĕнĕ КĔНЕКЕСЕМ

И. Сталин.—Ленин çинчен. Чăвашгосиздат. 1941 ç., 54 стр., хакĕ 75 пус.

Ку сборникре çак статьясем кĕнĕ: «Ленин РКП организаторĕ тата çулпуçĕ» (Ленин çуралнăранпа 50 çул тултарнă тĕле çырнă статья), «Заметкăсем», «Ленин вилнĕ пирки», «Ленин çинчен», «Америкăран килнĕ рабочисен пĕрремĕш делегацийĕпе калаçнинчен», «Нимĕç писателĕпе Эмиль Людвигпа калаçнинчен», «Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче каланă сăмах», «Кремльре аслă шкулсен работникĕсене йышăннă чухне каланă сăмах».

В. И. Ленин.—Государство çинчен. (1919 ç. июлĕн 11-мĕшĕнче Свердлов ячĕпе тăракан Университета вуланă лекци). Чăвашгосиздат, 1941 ç., 22 стр. Хакĕ 20 пус.

Кĕнекене шултра шрифтпа пичетлесе кăларнă.

В. И. Ленин.—Социализмлă тăван çĕршыва хӳтлесси. Чăвашгосиздат. 1941 ç., 74 стр., хакĕ переплетпа 1 т. 50 пус.

Сборникре В. И. Ленин совет çĕршывне империализмлă çĕршывсем тапăннинчен сыхлас, граждăн вăрçи вăхăтĕнче интервенцине тата шалти контрреволюцине пĕтерес ĕçе организацилес тĕлĕшпе çырнă статьясене, сăмахсене, чĕнсе каланисене кĕртнĕ. Ку кĕнеке «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» VIII сыпăкне вĕреннĕ чухне пысăк пулăшу пама пултарать.

В. И. Ленин.—Ялти чухăнсем патне (социал-демократсем мĕн тăвасшăн пулни çинчен хресченсене ăнлантарса пани). Чăвашгосиздат. 1941 ç., 102 стр. Хакĕ переплетпа 1 т. 50 пус.

Ку кĕнекене В. И. Ленин 1903 ç. март—апрель уйăхĕсенче çырнă. Кĕнекен тĕллевĕ çинчен В. И. Ленин çапла палăртнă: «Эпĕ халĕ хамăран аграрнăй программа çинчен хресченсем валли брошюра çырма тытăнтăм. Ялти класлă кĕрешӳ тĕлĕшпе хамăр шухăша эпĕ ялти халăхăн тăватă сийĕ (помещиксем, хресченсем буржуазийĕ, вăтам хресченсем тата пролетарисемпе пĕрле çурмапролетарисем) çинчен кăтартса паракан конкретлă цифрăсем тăрăх питех те ăнлантарса парасшăн» («Ленинский сборник», IV. стр. 223).

Кĕнекене шултра шрифтпа пичетлесе кăларнă. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» II сыпăкне вĕреннĕ чухне çак кĕнеке ăраснах палăлă вырăн йышăнса тăрать.

Радист-операторсен 2-мĕш конкурсĕ

Кăçал чи лайăх радист-операторсен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш конкурсĕ пулса иртет. Ытти облаçсемпе, крайсемпе тата республикăсемпе пĕрле ку конкурса пирĕн Чăваш республикинчи радиолюбительсем те хутшăнаççĕ. Республикăри конкурс кăçалхи сентябрĕн 15-мĕшпе октябрĕн 15-мĕш хушшинче пулса иртмелле. Республикăра мала тухнă радиолюбительсем Пĕтĕм Союзри конкурса хутшăнаççĕ.

Союзри конкурсра мала тухнă командăсем тата чи лайăх радист-операторсем дипломсем тата призсем илеççĕ. Пĕрремĕш вырăна йышăннă командăсене Пĕтĕм Союзри Радиокомитетăн кубокне тата куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Пĕтĕм Союзри конкурса декабрĕн 10-мĕшĕнче ирттерме палăртнă.

Пулас конкурса Улатăр районĕнчи радистсем вăйлăн хатĕрленеççĕ: Улатăр районĕнчен конкурса икĕ команда хутшăнаççĕ, пĕр команди вăйлă опытлă радистсенчен, иккĕмĕш — кăçал анчах вĕренсе тухакан çамрăк радистсенчен тăрать.

ТАЛЬНИКОВ.

Студентсен практикăллă ĕçĕ

Чăвашсен государство педагогика институчĕн истори факультетĕнче, студентсене практикăллă ĕçе хăнăхтарма, вĕçĕ кружок организацилеме. Вĕсенчен уйрăмăнах наукăпа тĕпчев ĕçĕсем кружокĕ аван ĕçлесе пырать. Кружокра студентсем научнăй ĕçсем мĕнле хатĕрлемеллипе паллашаççĕ тата хăйсем те хатĕрлеççĕ.

Сталинла стипендиат Никандров юлташ (III курсри студент) чăвашсем Болотников восстанине хутшăннине тĕпчесе вĕренет. Çав курсри студент Аверьянов юлташ чăвашсем Пугачев восстанине хутшăнни çинчен аван доклад туса пачĕ. Чăвашсем Степан Разин ертсе пынă восстанине хутшăнни çинчен тунă доклад та интереслĕ пулчĕ.

СУД

Стена хаçат редакторне хĕнекенсене тивĕçлипе айăплана

СĔНТĔР. Мăн Хураçка ялсоветне кĕрекен «Ядро» колхозра Е. Шенчелеева колхоз ĕçĕнчен пăрăнса çӳренĕ. Колхозниксем хĕрсе ĕçленĕ чухне инçетри хуласене кайса спекуляци туса пурăннă. Вăл çулталăк хушшинче 50 ĕçкунĕнчен те ытла туман.

Колхозри стена хаçачĕ çинче Шенчелеева Елена колхозра ĕçлеменни çинчен çырнă. Колхозра ĕçлемесĕр спекуляци туса çӳренине тăрă пыв çине кăларнă. Çакăн хыççăн Шенчелеева стена хаçат редакторне М. Данилова юлташа кӳрентерме пуçланă. Çул çинче хирĕç пулсан ятлаçнă.

Пĕрре стена хаçат редакторĕ М. Данилова юлташ шыв ăсма кайнă. Çав вăхăтра Шенчелеева тата унăн аккăшĕ Ольга Салдыркина Данилова кĕтсе тăнă. Данилова юлташ çăл патне çитсен унпа ятлаçма пуçласаççĕ. «Пирĕн алла лекрĕн» тесе хĕнеме, çăла яма тытăннă, пит-куçне чĕрнепе чавса пĕтернĕ.

Çак ĕçе Сĕнтĕр районĕнчи иккĕмĕш участокри халăх судĕ майăн 16-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Стена хаçат редакторне хĕненĕшĕн Е. Шенчелеевăна виçĕ çуллăха тĕрмене хупмалла, О. Салдыркинăна 6 уйăх юсанмалла ĕçлеттермелле тунă.

П. ЯРГУНЬКИН.

Çĕнĕ кинофильмсем

«Главкинопрокатăн» Чăваш республикинчи контори июнь уйăхĕнче республикăри киноэкрансем çине çакăн пек çĕнĕ кинофильмсем кăларать: «Таинственный остров», «Фронтовые подруги», «Парень из тайги», «Первопечатник Иван Федоров» тата ыт.

ЧĂВАШПОТРЕБСОЮЗА ЯЛАНЛĂХА ĔÇЛЕМЕ

стройгруппа начальникĕ, бухгалтерсем, экономист-финансист, машинистка

КИРЛĔ

Адрес: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, д. № 3, Отдел кадров.

3—2

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ *каменщики плотники чернорабочие.*

ОПЛАТА СДЕЛЬНАЯ. Общежитием обеспечиваются. Обращаться по адресу: г. Чебоксары, левый берег реки Волги (бывший стеклозавод).

5—4

РОДИТЕЛИ и УЧАЩИЕСЯ!

ПРОДАВАЙТЕ использованные учебники.

ПОКУПАЙТЕ учебники, необходимые вам в новом учебном году.

ОБЕСПЕЧЬТЕ СЕБЯ УЧЕБНИКАМИ ЗАБЛАГОВРЕМЕННО

ЗАПОМНИТЕ! Культмаги, раймаги, сельмаги и лавки потребкооперации ПОКУПАЮТ и ПРОДАЮТ СТАБИЛЬНЫЕ УЧЕБНИКИ.

Чувашпотребсоюз.

3—3

КАНАШСКАЯ ФЕЛЬДШЕРСКАЯ ШКОЛА

НАРКОМЗДРАВА ЧАССР

ОБ'ЯВЛЯЕТ

прием учащихся на первые курсы Фельдшерской школы и отделения медсестер для детских учреждений на 1941—42 учебный год.

Срок обучения в Фельдшерской школе—3 года, а на отделении медсестер—2 года.

В школу принимаются граждане от 15 до 35 лет, имеющие образование не ниже 7 классов средней школы.

Все поступающие в школу подвергаются приемным испытаниям по русскому языку (письменно и устно), математике, Конституции СССР, а для националов и по родному языку (письменно и устно).

Заявления подаются на имя директора школы с приложением следующих документов:

1) Свидетельство о рождении.
2) Справка о состоянии здоровья.
3) Свидетельство об образовании.
4) Дво фотокарточки с собственной подписью.
5) Почтовые марки на 60 коп.

Паспорт предъявляется при личной явке.

Прием заявлений с 20 июня по 10 августа 1941 г.
Приемные испытания с 10 по 25 августа.
Без испытаний в школу принимаются лица:

1. Окончившие полную среднюю школу (десятилетку).
2. Окончившие семилетку по основным предметам, кроме рисования, пения, черчения, физкультуры—на отлично. Отличники НСШ, а также учащиеся, выдержавшие приемные испытания на 2/3 предметов на отлично и 1/3 на хорошо—с 1-го сентября зачисляются на стипендию.

Иногородние учащиеся обеспечиваются общежитием.

Начало занятий с 1-го сентября.

Заявления направлять по адресу: г. Канаш, ЧАССР, ул. Пушкина дом № 2, Фельдшерская школа.

ДИРЕКЦИЯ.

2—1

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Хĕрлĕ Чутай ялĕнчи И. Г. Котеева 1940 çулта кĕркунне сасартăках тасти кайса çухалнă пулнă, вăл ăçтине никам та пĕлмен.

Кăçалхи майăн 14-мĕшĕнче Дубовка поселокĕ (Хĕрлĕ Чутай р.) патĕнче çынăн пуçчашкине тата кĕпе çĕтĕкĕсене туписан, следстви оргăнĕсем ку ĕçе тĕрĕслеме пуçланă.

Тĕрĕслени çакна кăтартса панă: И. Г. Котеева унта пĕр тăван Петр Котеев вĕлернĕ; ашшĕ-амăш вилсен, пурлăх уйăрас шухăш вĕсем пĕр-пĕринпе вăрçнă. Çавăн пирки вăл ăна вĕлернĕ те. Вĕлересссе—сывăрнă чухне чулпа пуçран çапса вĕлернĕ, вара вилнине вăрманти çырмана кайса пăрахнă.

Хăйĕн айăпне йышăннă П. Котеева арестлесе суда панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Цивильского завода примусных горелок НКМП ЧАССР на 1-е января 1941 года (в рублях)

Наименование статей баланса	Сумма на 1-ое января 1940 г.	Сумма на 1-ое января 1941 г.	Наименование статей баланса	Сумма на 1-ое января 1940 г.	Сумма на 1-ое января 1941 г.
Основные средства	379705	381343	Уставной фонд	454504	677451
Сырье, материалы и топл.	18345	8903	Рабочие и служащие по зарплате	11851	16208
Незавершенное производство	46792	16105	Предстоящие платежи	—	1894
Готовая продукция	—	65	средства для кап. ремонта	2562	9142
Расходы будущих отчетных периодов	364	—	Амортизационный фонд, подлежащий взносу в Промбанк	—	8866
Особый счет в Госбанке на кап. ремонт	—	8675	Целевое финансирование	266	500
Товары отгруженные	—	5774	НКФ по налогу с оборота	527	303
Касса и расчетные счета	427	404	и прочим расчетам	12.04	21814
Дебиторы	9722	9329	Кредиторы		
Внутренние расчеты: со строительством	26389	892			
Убытки текущего года	—	223688			
БАЛАНС	481744	736178	БАЛАНС	481744	736178

Счет прибылей и убытков

УБЫТКИ	СУММА	ПРИБЫЛИ	СУММА
От реализации	22490	Прибыли прошлых лет	2872
Разница между себестоимостью и отпускными ценами на остаток готовых изделий	40	Сальдо убытков	223688
Убытки от эксплоатации жилищно-коммунального хозяйства	582		
Убытки прошлого года	1037		
БАЛАНС	226560	БАЛАНС	226560

Директор завода ПАВЛОВ.
Гл. бухгалтер ДЬЯКОНОВ.
Баланс утвержден НКМП ЧАССР 14 марта 1941 г.
Гл. бухгалтер НКМП ЧАССР ТИМОФЕЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çыруссемпе рабсельчорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 2475.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. б. 58×84 п. л.